21-3

Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикки.

Пĕтĕм тĕнçери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

Н. ГЛЕБОВ.

ПИРĔН ТĔП САККУН.

(НАШ ОСНОВНОЙ ЗАКОН).

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ.

ТĔП ҪĂВАШ ПАЙĔ КĂЛАРНĂ.

Издательство Центрального Чувашского Отдела при Народном Комиссариате по национальным делам.
ХУСАН—1921 çул.

Р. В. Ц. Печатано 6000 экз.

Казань, 5-я Государственная типография. 1921 г.

Пирĕн тĕп саккун.

Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикĕн конçитутсийĕ.

Кашни патшалăхăн хăйĕн саккунĕ пур. Çапла Раççей хресҫенĕ, йе ĕçлекен йут патшалăха кайас пулсан, вĕсен çав патшалăхри саккунсемпе паллашмалла пулать.

Хрантсине пурăнма кайнă Раççей хресҫенĕн авланасси килсен, унăн малтан тĕрлĕрен токăвăрсене ĕçе кăртекен çурта (ноттариата) каймалла. Анкланҫе апла мар, унта вăл хăйне кăмăла килекен йе нотариата, йе ҫиркĕве, иккĕшĕнҫен пĕрне кайма пултарать. Раççейре тата, канаш ирĕкĕ пулиҫҫĕн пуп патне каймасан венҫете саккунлă шутламан.

Кун пек ĕçсем питĕ нумай кăтартма пулать.

Анҫах кашни патшалăхра тĕрлĕрен венҫетпе ытти йĕркесĕмсĕр, хушусемсĕр пуçне тепĕр саккун пур. Çав саккун тăрăх пĕтĕм патшалăхри халăх пурнать, унтан нинам та иртсе кайма пултараймасть, çавăнпа та ăна—*тĕп саккун*, теççĕ.

Тĕп саккун кашни патшалăхрах пĕр пек мар. Çапла Хрантсинҫе—пуртуалла республикă, унăн пуçĕнҫе парла-

ментпа нреçитент тăраççĕ. Анклинђе — конститутсиллĕ монархи, унтя корољ хăйĕн ĕçĕсемшĕн парламент умĕнђе сăмах парат̆.

Анђах пĕтĕм тĕнђери патшалăхсенђи тĕп саккунсем пĕр пек мар пулсан та, пурте вĕсем мул ирĕкне сыхлаççĕ, ĕç халăхне мул пусмăрлăхĕ айĕнђе усраççĕ.

Тĕнђере пĕр патшалăх та хăйĕн тĕп саккунĕсĕр пурăнмаст̆, анђах пĕрин те тĕп саккунĕ Канаш Раççейĕнни пек мар.

Пирĕн тĕп саккун анђах ĕç халăхĕн ирĕкне сыхлат̆, мул пусмăрлăхĕнђен хăтарма тăрăшат̆.

Патша трунне сирпĕтсен Раççейре кивĕ саккун та пĕтрĕ. Мул тарçисен вăхăтлăхлă тӳре-шари уђретиттĕлни сопрањи урлă çĕнĕ, кăшт краскапа сăрланă мул патшалăхĕсенни пек конçтитутси тума шухăшларĕ. Анђах май тухмарĕ.

Уђретиттĕлни сопрањин 1-мĕш саççетанийĕнђе ĕç халăхĕн шанђăклă çыннисем ĕçлесе, експлуаттатси тӳссе пурнакан халăх тивĕçин текларатсийĕне *) йышăнма ыйтрĕç. Мул ирĕкне сыхлакан тарçăсем ĕçлекенсенне хресђенсене кĕрет хирĕç кайса, çав текларатсине Раççейĕн çĕнĕ тĕп саккуне кӳртмерĕç. Вĕсем мула сыхлакан саккун тума шухăшларĕç. Анђах ĕç халăхне ун пек саккун кирлех мар, çавăнпа уђретиттĕлни сопранине ђасах салатса йанă.

---

*) Текларатси — ђаплăн пĕлтерни.

Ун вырăнне Пĕтĕм Раççейри ĕçлĕкенсен, хресҫенсен, хĕрлĕ салтаксен тенутаҫĕсен канашĕсен 3-мĕш сийĕ пухăнăҫĕ. Çав сийĕсри Раççей ĕç халăхĕн 916 шанчă çыннисем пĕр саспа ĕç халăхĕн текларатсине йышăнăҫĕç.

Çав текларатсине канашсен 5-мĕш сийĕ йышăннă Раççей Республикĕн конституцийĕ Раççей Хветерат-сийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикĕн тĕп саккунĕ пулса тăраççĕ.

Çак саккун халĕ вăй илнĕ, çавăнпа унпа Раççейри кашни ĕç çыннин паллашмалла. Пирĕн халĕ пĕтĕм ĕç халăхĕ тунă саккун пур, çавăнпа кашни ĕç çынни хăй тунă саккун çинҫен пĕлмесĕр пурăнма пултараймасть.

Çак тĕп саккун ĕç халăхĕн çакăн пек ҫаплă сăмахĕсемпе пуçланать.

1. Раççей—Ĕçлекенсен, Салтаксен, тата Хресҫенсен Тенутаҫĕсен Канашĕсен Республикки пулса тăрать. Пĕтĕм ирĕк тĕпре те, вырăнсенҫе те çав Канашсен аллинҫе тытăнса тăрать.

Çак ҫаплă сăмахсем Раççейре ку таранҫен тĕнҫере те пулман йĕркене тăваççĕ. Раççей—пĕтĕм ĕç халăхĕн Республикки пулса тăрать, пĕтĕм ирĕке, пысăк хуласенҫен пуçласа пĕчĕк ҫухăн йалсене çитиҫҫенех, ĕç халăхĕ илет. Раççейре ҫухăнсене пусмăрлакан мул ирĕкĕн хăваҫĕ пĕтет.

Ку таранҫҫен мул тĕнҫи икĕ республаккăна уйăрăлса тăнăҫҫĕ: нĕри—пуйан хуçасен парламента ҫенсăлла претста-

виттĕлсем кӳртекенсем *), тепри—темократтиллĕ респупликкă, суйланса кĕмелли уҫрештенисене пурте, тӳрех, пĕр тан тата вăрттăн саспа суйламалли йĕркеллĕ. Çав нкĕ респупликкинҫе те мул ирĕкĕ ĕç халăхне пусмăрлăхра усранă. Çак йĕркене Канашсен Респупликки çеç пĕтерҫĕ.

Ĕç халăхĕн парламĕнтĕнҫе мул тарçисем валли вырăн çук. Ирĕк кусен аллинҫен туртăнса илсе ĕçлекенсен аллине куçаҭ.

2. Раççей Канаш Респупликки натсисен канаш респупликкисен хветератсийĕн хисепĕпе ирĕклĕ натсисен ирĕклĕ пĕрлешĕвĕ йĕркипе пулса тăраҭ.

Раççейре тĕрлĕрен вак халăхсем пурнаççĕ: паҫаксем, хаххулсем, хвинсем, латтышсем, çармăссем, тутарсем, кăркăссем, пушкăртсем, тата ыттисем те.

Çак вак халăхсенҫен кашнийех ĕлĕк авал пĕр пысăк натси (пĕр ҫĕлхепе калаçакан ушкăн) пулнă, анҫах кĕрешӳсем пирки наҫартараххисен вăйлăраххисене пăхăнмалла пулнă, хăйсен ҫăн ирĕклĕхне çухатса вăйлăрах халăхсене пăхăнса пурăнмалла пулнă.

Çапла пĕтĕм Йевроппăри мул патшалăхĕсем йут çĕрсене

---

*) Ҫенсăллă претставиттĕлствă—ку йĕркепе пурте суйлама, пурте суйланма пултараймаççĕ, калăпăр, укçа нумай тытакансем, хваттерсемшĕн ытларах куланай тӳлесе тăма пултаракан çынсем кăна суйлама, суйланма пултараççĕ.

турта-турта илсе, наҫартарах, ҫухăнтарах вак халăксене вăйлăраххисене пăхăнтарма тăрашнă.

Раҫҫей — натсисен канаш республиккисен хветератсийĕн хисепĕпе ирĕклĕ натсисен ирĕклĕ пĕрлешĕвĕ йĕркипе, йе ирĕклĕ паттăлăхсен пĕрлешĕвĕ пулса тăрать.

Раҫҫейре пурнакан кашни вак халăх пурнăҫа хăй пĕлнĕ пек, хăй ирĕкĕпе тума пултарать. Хăй тĕллĕн вăл Раҫҫей Канаш Республиккин тăрĕ-шарипе сыхăнса тăмалли саккун йĕркисем хатĕрлеме пултарать. Анҫах çав йĕркесем паллах, тĕрлĕр н çĕр улпуҫĕсемпе пуйăн хуçасен пусмăрлăхне пĕтерекен йĕркесем пулмалла: пур натсисен те ĕçлекенĕсемпе хресҫенсем мул ирĕкĕҫĕн хатăлма тăрăшаççĕ.

3. Пĕтĕм Раҫҫейри Ĕçлекенсен, Салтаксен, тата Хресҫенсен Тепутаҫĕсен Канашĕсен 3-мĕш сиесĕ сынна сын експлуататсилессине, сынсем темиçе класа (пуйăна ҫухăна) уйăрăлса тăнине пĕтĕмпех пĕтерес ĕçе, експлуататтăрсене пĕр хĕрхенмесĕр çĕнтерессине, халăх пурнăçне сотсиалисăм вĕрентнĕ пек тăвассине, сотсиалисăма пĕтĕм тĕнчере çирĕле кăларассине, хăйĕн ҫăк кирлĕ ĕçĕ вырăнне хурса, малалла татса каласа хурать:

а) Çĕр сотсиалисатсине ĕçе кӳртмешкĕн, çĕре харпăр сын тытас йĕркене пĕтермелле. Пĕтĕм çĕр хвоҫĕ пур халăх пурлăхĕ пулать те, ăна ĕç халăхне пурне те пĕр укçасăрах танлаштарса палалла.

Ĕçлекенсемпе хресҫенсем çĕр улпуҫĕсен ирĕкне сирпĕтсен, çав ирĕкĕн тĕп никĕсне те ишмелле, çĕр улпуҫĕсен çĕрне туртса илсе, пуйансен ҫухăнсене эксплуаттатсилес йĕркене те пĕтермелле. Саккун пĕтĕм çĕре халăх пурлăхĕ тăваҫ. Çĕр улпуҫĕсенҫен çĕрне туртса илеççĕ те, ăна кашни хресҫене пĕр укçасăр таплаштарса параççĕ. Пĕтĕм çĕр—ҫиркӳн, монастырĕн, уйрăм харпăрлăхлă çынсен, тата ыттисен те ĕç халăхĕ аллине кайаççĕ. Çĕре пурне тĕ таплаштарса параççĕ, тепĕр тĕрлĕ халасан кашни ĕçлекен хăй çемйине кирлĕ ҫухлĕ, çĕр илет.

Çĕре ĕçлекенсене таплаштарса пĕр пек уйăрса пани сахал-ха. Çапла тунине епир татах сотсиалисăм тăваймастпăр.

Пĕр йалти ҫухăн хресҫенсем улпут çĕрне пĕр-пĕринпе валеҫнинҫен мĕн пулаҫ-ха вара? Вĕсем хӳ те ҫун пуçне пĕр теçеттин кăна мар 10-шар теçеттине илеҫҫĕр, анҫах ĕçлемелли хатĕрпе выльăх-ҫĕрлĕх ним те çук.

Çĕпĕре куçнă çыннах илер-ха. Çĕпĕре çитсенех вăл 14 теçеттине çĕр илнĕ пултăр, анҫах вăл 3 теçеттинĕпе çеç усă кураҫ, ыттисене хытта хăвараҫ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен унăн лаша та, ним хатĕр те пулман, кайăк пекех çара.

Халĕ те çапла пулма пултараҫ. Çапла ан пултăр тесен, йалта та сотсиалисăм пултăр тесен çĕре таплаштарса пĕр пек валеççе пани çитмест, тата ҫухăна хăйне те, пĕтĕм патшалăха та усă кăтартакан хуçайствă тумалла.

Çапла тума çĕре ушкăнпа пĕрлешсе ĕçлесен, çĕр ĕçлекен коммунăсем тусан çеç май пур. Çапла ĕçлесен ĕçлемелли хатĕр те, лаши те нумайах кирлĕ мар, тата пысăк машшин-

семпе ĕçлеме те май пур. Кун çинҫен лайăхрах, тĕплĕрех шухăшласа пăхсан ҫухăн хресҫенсен хаваласнисах çĕр ĕçлемелли коммунăсем тумалла.

у) Патшалăхăн хаклă йапаласем: пур вăрмансем, çĕр айĕнҫи йапаласем, шывсем тата пур инвентарҫунли те, ҫунсăрри те, çĕр ĕçне кăтартма пултаракан улпут çĕрĕсем, çĕр тĕлĕшпе усă курасшăн пулнă ĕçсем пĕтĕм халăх аллине тухаççĕ.

Вăриан, çĕр айĕнҫи пуйанлăх, шывсем—пурте вĕсем хаклă, патшалăха кирлĕ йапаласем, çавăнпа пурте вĕсем халăх аллине тухаççĕ.

Пĕр патшалăх ирĕкĕ çеç ĕç халăхне усă тăвас тĕлĕшпе вăрман, шыв, çĕр айĕнҫи пуйанлăх ĕçĕсене йĕркелесе пыма пултарать. Анҫах ку: хресҫене патшалăх çуртсем туса вăрман, вутă, пул тытма шыв, çĕртрен ҫул кăларма ирĕк памасть, тени пулмасть. Çук. Вăл çӳлте кăтартнă йапаласемпе пуринпе те усă курма пултарать, анҫах йĕркесĕр мар: малтан йал канашĕнҫен, унтан вулăс канашĕнҫен ирĕк ыйтмалла. Пур инвентар-ҫунли те, ҫунсăрри те, çĕр ĕçне кăтартма пултаракан улпут çĕрĕсем, çĕр тĕлĕшпе усă курасшăн пулнă ĕçсем пĕтĕм халăх аллине тухаççĕ. Вĕсене саккун пайлама ирĕк памасть. Саккум хресҫенĕ улпут именнинҫен йулнă пăсна çӳрекен ака пуçĕне, лашапа, ĕнепе усă курма ирĕк парать, анҫах каллĕх йĕркесĕр мар; малтан канашсенҫен ирĕк ыйтас пулать. Ака пуçне усă курма илнĕ хресҫен: ку хамăн-ха, ăна никама та памастăп, теме пултараймасть. Çук. Ака пуç

вăл пĕтĕм ĕç халăхĕн, пуринҫен ытла çĕре пĕрлешсе ĕçлекен ушкăнăн. Патша йĕркипе ĕç халăхĕ валҫăн çĕр ĕçне кăтартакан улпут çĕрĕсем, тĕрлĕрен çĕрпе усă курас тĕлĕшпе тунă ĕçсем ҫинчен хăваҫĕ. Çаксене пайласа пĕтермелле мар. Хапрăка пайласа ним усси те çук, çавăн пекех лайăх хуçайства пайласа пĕтерсен епир хамăра валли сийĕн çеç тупăпăр. Капла тăвиҫҫен хуçайства татах лайăхлатсан пурне те усă пулать. Çак тĕлĕшпе пĕтĕм пăтшалăхăн, тĕпри, вырăнсенҫи Канаш уҫрештенисен тăрăшса ĕçлемелле. Çавăнпа çĕр ĕçне кăтартакан улпут çĕрĕсем çинҫе ĕç халăхĕн тӳре-шари хресҫенсене тара тытса ĕçлеттерет. Капла туни вăл хресҫенсене, патша ҫухнехи пек експлуататсилени пулмасăр. Канаш Республикĕн пуйăнлăхĕ çеç пымайланать.

и) Ĕçлекенсен контролĕ çинҫен, тата Халăх Пурлăхĕн Аслă Канашĕ çинҫен кăларнă саккуна, хапрăксене, савăтсене; рутниксене, ҫукун, çулсене, тата ытти ĕç тумалли, йĕ турттармалли йăналасене. Ĕçлекенсемпе хресҫенсен Канаш Республикки аллине пĕтĕмпех кăларса парас ĕçĕн пуçламăшĕ, тесе йышăнмалла. Вăл саккун експлуаттаттăрсене ĕçлекенсен ирĕкĕ айне тăратать.

Çĕр улпуҫĕсене хăйсен çĕрĕсенҫен хăваласа йанă хыçăн, Канаш ирĕкĕ хапрăк-савăтсене уйрăм хуçасем тытас йĕркенĕ пĕтерме тытăнҫĕ. Çак тĕлĕшпе вăл хапрăк-савăтсене ĕçлексен контролĕсен аллине паҫĕ

Мĕншĕн-ха Канаш ирĕкĕ малтанах хапрăк-савăтсене мул хуçисенҫен туртса илмерĕ? Мĕншĕн тесен, хапрăк-савăтсен ĕçĕ çĕр ĕçĕ пекех çăмăл мар. Ĕçлекенсем хапрăк-савăтсене хăйсен аллинҫе тытма хăвăртах пултараймаççĕ, малтан вĕсен вĕренес пулать. Çăк ĕçре техниксем, инженерсем тĕрлĕрен ăстасем кирлĕ. Çак çулте кăтартинă çинсем мул ирĕкĕ майлăрах, çавăнпа вĕсем ĕç халăхĕ ирĕке хăй аллине илсен ĕç халăхĕн тăшманĕсем йенелле сулăнăçç. Хапрăк-савăтсене патшалăх аллине илме шанҫăклă ҫĕрĕ вăй нумай кирлĕ. Çавăнпа çак ĕçе Канаш ирĕкĕ пулсан сакăр уйăх иртсен çеç пурăнăçа кӳртмелле пулҫĕ. Анҫах каллех харпăрăха пăҫах пĕтерме вăй, тата вăхăт та нумай кирлĕ. Çавăнпа малтанах ĕç халăхĕн ирĕкне наҫарлатас мар тесе, Канаш ирĕкĕ хапрăк-савăтсене ĕçлекенсен контролĕсен аллине паҫĕ. Саккун савăт комитетне, контроль комиссине савăтри ĕç мĕнле пынине, савăт хуçипе савăтри атминистратси ĕçлесе тĕрĕс пынине астуса тăма ирĕк парать.

Кайарахпа вара Канаш ирĕкĕ хуçасенҫен хапрăк-савăҫĕсене пĕтĕмпех туртса илҫĕ те, патшалăх аллине паҫĕ.

р) Канашсен III-мĕш сийесĕ патшан, улпутсен, пуршуаçин тӳре-шари кĕнĕ парăма пĕтернĕ Канаш Саккунне, пĕтĕм тĕнҫери панккă, хвинанс капиталне пĕтерес ĕçĕн пуçламăшĕ вырăнне хурса, Канашсен тӳре-шари малашне те, пĕтĕм тĕнҫери ĕçлекенсем вăрçса капитал пусмăрлассине çĕнтериҫҫенех, çак çулла тĕреклĕ пырĕ, тесе шанса тăрать.

Ĕçлекенсенпе хресҫенсен тӳре-шари Раççей пуршуаçине сирпĕтнĕ хыççăн тĕнҫере çăхансене-мул хуçисене те Раççей ĕç халăхĕн йунне татах ĕмме памаст. Вăл Микула патша, улпут-хуçисем Хрантси, Анкли, Кермани тата ытти патшалăхсенҫи мулпа парăмланнă парăмсене тӳллемест.

Патша вăрçи хушшинҫе Раççей пуршуаçийĕ йут патшалăхсемпе 56 мĕлйартлăх парăм тунă. Шутпа халĕ пирĕн йут патшалăхсенҫи мул хуçисене 19 мĕлйарт ылтăн укçа тӳллемеллеҫҫĕ Мĕншĕн? Йут патшалăхсенҫен йунлă вăрçă татах малалла тăвас тĕлĕшпе кӳнĕ тупă, снарет, тата ытти çынна вĕлермелли ăпаласемшĕн. Анҫах Раççей ĕç халăхĕ çав парăма тӳлесе хăйне татах ҫухăнлатма пултараймаст.

с) Пĕтĕм панккăсем ĕçлекенсемпе хресҫенсен патшалăхĕ аллине кайни-ĕçлекенсене капитал ирĕкĕнҫен кăларакан йĕрке вырăнне кĕрсе çирĕпленет.

Çак саккун тăрăх пĕтĕм панккăсем панкка хуçисенҫен тухса ӳкеççĕ те, пĕтĕм ĕç халăхĕн пурлăхĕ пулаççĕ.

Ку таранҫен панккăсем мул хуçисене ĕç халăхне пусмăрлăхра тытас тĕлĕшпе нумай пулăшатҫĕç. Панккирсемпе хапрăк-савăт хуçисем хуть те хăçан та ĕç халăхне хирĕç пĕрле ĕçлерĕç. Панккăсенҫе ĕлĕк темĕн ҫухлĕ халăх укçи выртатҫĕ, çав укçапа пĕр пĕҫĕкçеççĕ ушкăн миллионерсем усă кураттăç.

Саккун ĕç халăхне мул хуçисем эксплуаттатсинес йĕркене пĕтернĕ майĕпе мул хуçисен, тĕрекĕсене те (панккăсене)

пĕтерет. Канаш Раççейĕнъе пур паннкăсем те Канаш Республиккин Халăх Банкĕне пĕрлешеççĕ.

л) Малашне халăх хушшинъи харам пырсем пĕтĕр тесе, халăх пурлăхне йĕркене кӳртес тесе, пур çынна та ĕçлеттермелли йĕркене кĕрет.

Муя хуçисем, çĕр улпуъĕсем хăйсен ĕмĕрне пĕр ĕçлемĕсĕрех пурăниса иртерме вĕреннĕ. Вĕсем тĕрлĕрен вĕреннĕ çынсене тара тытса ĕçлеттернĕ, лайăх çуртсенъе усранă, хăйсем йут патшалăхсене кайса тупăш тупса пурăннă.

Халĕ, çынна çын пусмăрлас йĕркене пĕтернĕ пулсан та, ĕлĕк пуйса йулнă харам пырсем, улпут-хуçасем пĕр ĕçлĕмесĕрех лăпкă пурăнма шухăшласçĕ, халăх ĕçленĕ ъухне ахалех пĕççе тăратса выртаспăн.

Çавăн пĕк харам пырсене пĕтерес тĕлĕшпе саккун пурне те ĕçлеттермелли йĕрке кăларъăç. Тепĕр тĕрлĕ каласан, тутă, çи пуçа питĕрсе пурнас тесен кашниннех тăрăшса ĕçлемелле.

Харам пырсемпе халъхи вăхăтра кĕрешме йывăр. Анъах пĕтĕм суту илӳ ĕçне патшалăх хăй аллине илсен, пур лавкасенъе те ĕçлекен çынна çеç тавар памалла тусан, харам пыр ун ъухне ним те илеймĕ. Сотсиалисăмлă Республиккăра пурин те ĕçлемелле.

ш) Пĕтĕм ирĕк ĕçлекен халăх аллинъе пултăр тесе, эксплуаттаттăрсен ирĕкĕ çийеле тухма никçан та май ан туптăр тесе, ĕçлекенсене хĕç-пăшал памал-

ла, ӗçлекенсемпе хресҫенсенҫен Сатсиалисӑмла хӗрлӗ çар тумалла, пуйансен-класӗнҫен пӗтӗм хӗç-пӑшала илмелле.

Патша ҫухнехи хуçисен, тӗрлӗрен йенралсен аллинҫе тытӑнса тӑнӑ çар-ӗç халӑхне ҫуралӑхра усракан çар пулнӑ. Сав çар Раççейри патша трунне сыхласа тӑнӑ. Вал çынна çын пусмӑрлас йӗркен, експлуаттатсин тӗрекӗ пулнӑ. Çав çарӑн пуçӗнҫе улпут-хуçа ывӑлӗсем тӑнӑ. Охвитсерсем улпутсемпе, ҫиновниксемпе, тата ытти мул хуçисемпе те пӗр ретре тӑнӑ. Вӗсем çара мул ирӗкне, мул мӗн хушнине пӗр сӑмах каламасӑр итлесе пурӑнмалла пулнӑ. Анҫах истори урапи хӑй çулӗпех кусса пыҫӗ. Патша çарӗ хӑйех патшине те, улпуҫӗсене те, тата ытти мул хуçисене те вырӑнсенҫен сирпӗтрӗ.

Ӗçлекенсемпе хресҫенсен тӳри-шари патша вырӑнне, Сотсиалисӑмлӑ Хӗрлӗ Çар турӗ. Çак çар хуҫ те хӑш вӑхӑтра та ӗç халӑхӗн ирӗкне сыхлама хатӗр.

Çак çара ӗç халӑхӗн, ӗçлекенсемпе хресҫенсен ывӑлӗсем çеç кӗме пултараççӗ. Кунта ахаҫ салтакран пуçласа ҫи аслӑ командир та ӗç халӑхӗн ывӑлӗсенҫен пулмалла. Сотсиалисӑмлӑ çарта мул хуçисен, пуйансен аҫисем валли вырӑн пулмалла мар. Халӗ çапла тума май килмест, ӗç халӑхӗн ывӑлӗсем ӗлӗкхи йенралсен вырӑнне йышӑнма вӗренсе çитейменха. Анҫах Канаш тӳре-шари ӗç халӑхне хӑйӗн çарне мӗнле йӗртсе пымаллине вӗрентет.

н) Ку таранҫҫен нихçан пулман çак ирсӗр вӑрçӑра

етем йунĕне шӳтернĕ хвинанс капиталĕпе империалисăм аллинҫен етем ăруне туртса кăларса хăтарас шухăша хытă тытса, Канашсен III-мĕш Сйесĕ, Канаш тӳре-шарин вăрттăн килĕштернисене пĕтес политтискине, халь пĕр пĕринпе вăрçакан çарсен хресҫенĕсемпе, ĕçлекенсемпе пĕрлешме пулăшнине, кирĕк мĕнле пулсан та, революцти йĕркипе тăрăшса, аннеҫипе контрипутсисĕр, харпăр натсине хăй пурăнăçне хăй мĕнле тăвас тенĕ, çавăн пек тума ирĕк парса, пĕтĕм халăхпа килĕшӳ тăвас, тенине йышăнаҫ.

Тĕнҫен пысăк патшалăхĕсĕнҫи мул хуçисем такçапах пĕр пĕринпе вырăнта килĕшӳсем турĕç. Çав килĕшӳсене вĕсем тĕнҫене пĕр пĕринпе валеçес, ҫухăнрах халăхсене çаратас тĕлĕшпе турĕç. Çавăн пек килĕшӳ токăвăрсем темĕн ҫухлех пулнă. Сăмахран Кермаҫи Интине, Анкли Перçине, Раççей Армеҫине, çаратма хатĕр-ҫыхă. Мĕншĕн çав тăранман патшалăхсене йут çĕрсем кирлĕ пулнă? Раççейĕн хайĕн те çĕр темĕн ҫухлех. Çĕр вĕсене тĕттĕм, вĕренмен халăха çаратас тĕлĕшпе кирлĕ пулнă. Тĕттĕм халăха вĕсем хайсен таварĕсене виç хут хакла сутаççĕ, ун вырăнне çав халăх пурнакан çĕртен хапрăк-савăтсенҫе кирлĕ ҫĕр тавар турттараççĕ ҫĕр тăварсăр вĕсем пуйаймаççĕ те.

Çав вăрттăн тунă килĕшӳсем пирки вара тĕнҫинех йунлă вăрçă пуçланҫĕ, мулăч вăйлă патшалăхĕсем тĕнҫене

пĕр пĕринпе валеҫес тĕлĕппе хĕҫ-пăшалсемпех тавлашма пуҫларĕҫ.

Епир йунлă вăрҫа ҫарас тесе, пăлханма пуҫлансанах ҫав вăрттăн тунă кĕлĕшӳ токăвăрĕсене халăха пĕлтерме пытрăмăр. Анҫах Керенски тӳре-шари итлемерĕ; вара ĕҫлекенсемпе хресҫенсем мул ирĕкне хирĕҫ, вăрттăн тунă килĕшӳ токăвăрĕсем ҫинҫен пĕтĕм тĕнчене пĕлтерҫĕҫ.

Вара мĕн курăнҫĕ? Ҫав токăвăрсене пурне те пумайтарах ҫĕр туртса илсе, халăха тĕрлĕ майсемпе улталаса, ҫаратса, мул ирĕкне сыхлаттарас тĕлĕппе ҫеҫ тунă. Ҫавăнпа ҫав йунлă вăрҫа ҫармалла пулҫĕ, анҫах пĕтĕм ĕҫ халăхĕ: хуласенҫи ĕҫлекенсем, йалсенҫи хресҫенсем, хронтри салтаксем тăрăшсан ҫеҫ вăрҫа пĕтерме май пур. Епир вара ҫав вăрҫа ҫарма пытрăмăр, хамăр шухăш ҫинҫен пĕтĕм тĕнчери ĕҫ халăхне пĕлтертĕмĕр, уна та пирĕн ҫулпа пыма ҫĕнтĕмĕр.

Епир пур паршалăхсенҫи, пуринҫен ытла Керманинҫи ĕҫ халăхĕ тăрăшса ĕҫленипе ҫеҫ пĕтĕм тĕнчипе килĕшӳ тăвассине лайăх пĕлтĕмĕр. Ҫавăнпа малтан Раҫҫей салтакĕсене нимĕҫсенҫен, австрийтсăсенҫен, италҫăнтсăсенҫен, тата ытти сенҫен те уйăрса тăракан ҫыбĕсене пĕтермелле. Ĕмĕрлĕх килĕшӳ тупас тесен, тĕрлĕ ҫĕлхепе калаҫакан ĕҫ халăхĕн пур салтакĕсем валли те пĕр хронт кирлĕ. Ҫак тĕлĕппе Раҫҫейĕн революцилле салтакĕсем тĕрĕс ҫулпа пыма пуҫларĕҫ, вĕсем хайсен нимĕҫ тăван салтакĕсемпе пĕрлешме тытăнҫĕҫ. Кашни Раҫҫей салтакĕ хайĕн умĕнҫе тăракан ĕҫсене лайăх пĕлҫĕ. Епир никамран та ҫĕр туртса илесшĕн пулман, тĕвҫери йунлă вăрҫа ҫарса пур халăхпа та килĕшсе пурă-

насшăн пулнă. Никамран та вăрçăра тăккаланнăшăн йапала ишме шутламан. Анҫах Кермани ĕç халăхĕ пире пулăшмарĕ, ирĕксĕрех пирĕн Керманин мул хуçисемпе килĕшмелле пулҫĕ, меншĕн тесен Раççей халăхĕ вăрçăпа ывăнса çитрĕ. Вара пирĕн нимĕç ĕç халăхĕ хăйсен мул хуçисене хирĕç тухса, пирĕнпе пĕрле вăрçма пуçлассине кĕтмелле пулҫĕ.

5. Канашсен III-мĕш Сйесĕ-пуршуаçи ҫивилисатсишĕн Аçири, колонисенҫи, тата пĕҫĕк çĕрсенҫи темиçе çĕр мĕлйун ĕç халăхне ҫуралăхра усраса хăш-хăш уйрăм натсири експлуаттаттăрсен ырă пурнăçне туса тăракан тискер политтиккине пĕтерме хушат.

Пур пысăк мул патшалăхĕсен—Анклин, Америккăн, Керманин, тата ыттисен политтикки ҫи пĕҫикçеççĕ патшалăхсенҫи ĕç хăлăхне çаратса, тĕттĕмлĕхре ҫуралăхра усрама тăрăшнă. Аçире, Кăнтăрти Америккăра, Ахриккăра, Австралире пурнакан халăхсене Йевроппăри мул хуçисем пайтах хĕн-хур кăтартнă. Çав çĕрсене вĕсем хăйсен аллисене илнĕ, хăйсен çарĕсене тăратнă, хĕç-пăшалсем пулăшнипе вăй çитнĕ таран çаратнă. Çынсене темĕн ҫухлĕ вĕлернĕ, хăйсен кирлĕ мар, аҫасем выҫамалли йапаласемпе тĕттĕм халăхран улталаса тĕрлĕрен выҫăх, тискер-кайăк тирĕсем, рис ыллтăн тата ыттисене те улăштарса илнĕ. Епир ун пек вăрă-хурахсен политтиккине йуратмастпăр, пире çын аллинҫи кукăҫ кирлĕ мар. Çавăнпа та:

6. Халăх Комиссарĕсен Канашĕ Хинҫантийе пĕтĕм ирĕк панине, Перçинҫен çар кăларнине, Арменине

хăй пурнăçне хăй тăвас теннĕ пек тума ирĕк панине Канашсен III-мĕш Сĕнĕçĕ хисеп туса йышăнать.

Канаш Раççейĕн тӳре-шари пур, сăмахпа мар, ĕçре те тĕрлĕрен вак халăхсене хăйсем пĕлнĕ пек, хăйсене йӳрĕхлĕ пурнăс тума ирĕк парать.

7, Пролеттариат експлуататтăрсемпе вăрçнă саманара, Пĕтем Раççейри Ĕçлекенсен, Салтаксен тата Хресҫенсен Тепутаҫĕсен Канашĕсен III-мĕш Сĕнĕçĕ, тӳре-шаран орканĕсенҫе пĕринҫе те експлуататтăрсем валли вырăн пулмалла мар, тесе шухăшлать. Пĕтĕм ирĕк ĕçлекен халăх аллинҫе анҫах, тата вĕсем суйланă, хăйсен ирĕкне панă Ĕçлекенсен, Салтаксен тата Хресҫенсен Тепутаҫĕсен Канашĕсен аллинҫе анҫах пулмалла.

Ĕçлекенсемпе хресҫенсен ирĕкĕ пуйансемпе, кулаксемпе пĕрле валеçме илмен. Ҫухăнсем нихăçан та хăйсен тăшманĕсемпе килĕшсе, ĕçе пĕрле тума пултараймаççĕ. Пур аслăрах вырăнсенҫе революцу силлĕ ĕçлекенсемпе хресҫенсен шанҫăклă çыннисем пулмалла.

Ҫас ҫасах халĕ вулăс Канашĕсене кулаксем кĕрсе ӳкеççĕ, тек вара ҫухансене улталаса ĕçлеççĕ. Канашра ларни кулака пит усăллă, Канашра кулаксем нумайтарах ларни кулаксемшĕн татах усăллă: вĕсем ĕлĕкхи пекех йала çаратма пуçлаççĕ, тырăпа çпеккуҫатсилеме тытăнаççĕ. Хуласенҫи Канашсенҫе пуйансене мар, вĕсен хӳрисем хыçĕнҫен пыракан меҥшевик-

семпе сылтăм ессерсене те, ҫăннипе, хапрăк-савăт хуçисемпе улпутсен ирĕкне сыхласа Канаш ирĕкне ĕç халăхĕн ирĕкне хирĕç пыракансене пĕрне те вырăн памалла мар.

Пĕтĕм ирĕке саккун ĕç халăхĕ аллине параť. Çак ирĕке ĕç халăхĕн алран вĕçерĕнсе кайасран çеç хытă сыхланмалла. Ирĕке пур вырăнсенҫе те лайăх сыхлама пĕлсен пире никам та çĕнтереймĕ.

8. Тата Раççейри пур натсисене ҫăнах та ирĕккĕн пĕрлештерсе çирĕп ушкăн тăвас тесе, Канашсен III-мĕш Сйесĕ Канаш Респупликкин Хветератсин тĕп йĕркине анҫах кăтартса хураť. Кашни натсисен ĕçлекенсемпе хресҫенсене хăйсен Канашĕсен полномоҫни сйесĕнҫе Хветераљни тӳре-шарана, тата ытти Канашсен ĕçлĕ вырăнĕсене йĕркепе кĕмеллине сăмах хума ирĕк параť.

Канаш тӳре-шари Сотсиалисăмлă Раççейри Ирĕклĕ Канаш Респупликкисин пĕрлешӳне (сойусне) тăваť. Раççейра пурăнакан пĕр натсан ĕçлекенсемпе хресҫенсен хăйсем тĕлĕн пурнăç тăвас тесен, вĕсене никам та ҫаракан çук. Ун пек кашни натсийех Канашăн тĕп тӳре-шарине çыхăнса тăмалли майсене, йĕркесене, хăйех хăй пĕлнĕ пек хатĕрлеме пултараť. Сотсиалисăмлă Респупликкăра пур вак халăхсен те пĕр хронтра мул ирĕкĕпе кĕрешмелле. Çавăнпа пĕр Раççейри ĕçлекенсемпе хресҫенсене пĕрлештерни сахал, пĕтĕм тĕнҫери ĕç халăхне пĕрлештерес пулаť.

Саккун тăрăх, Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа

Канаш Республикки — уйрăм патсисен республиккисен пĕрлешӳвĕ.

Раҫҫей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республиккин конституцийĕн йĕркисем.

9. Çак улăшăну саманара хуларипе йалти пролеттарисен, тата ӳхăн хресҫенсен тиктаттурĕне— Пĕтĕм Раҫҫейри Канашсен хăватлă ирĕкне-тăвасси Раҫҫей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республиккин конституцийĕн тĕп ĕҫĕ пулмалла. Çав Канаш ирĕкĕ пуршуаçийе пĕтĕмпех пусарса, çынна çын эксплуататсиленине пĕтерсе сотсиалисăм йĕркине пурнăҫа кӳртмелле. Вăл йĕркепе пурăнма пуçласан, çынсем классене уйăрăлса тăрасси те, патшалăх ирĕкĕ те пулмасть.

1917-мĕш çулта, йупа уйăхĕнҫе Раҫҫейра мул ирĕкне выӌама, йе çав вăхăтран тепĕр ивĕ уйăхран каллех Киш-кинсемпе, Пурышкинсемпе, тĕрлĕрен суйа сотсиалистсемпе, меӈшевиксемпе, эссерсемпе килĕшме ишмерĕҫ, ăна ĕҫлекенсемпе йалти ӳхăнсен хыта ирĕкне тума ишрĕҫ.

Йупа уйăхĕнҫи революцути пулиҫҫен Раҫҫейри комуниссем Канаш ирĕкĕшĕн 8 уйăх вĕрешрĕҫ, ĕҫĕ харама каймарĕ.

Халĕ пĕтĕм ирĕк Канашсен аллинҫе. Мĕне пĕлтерет-ха ку? Мĕне пĕлтерет-ха вăл пĕтĕм хулари ĕҫлекенсемпе йалти

хресҫенсем мул хуҫисемпе вӗсен тарҫисене те пуҫах пӗтерме ухӑшлани.

Канаш ирӗкӗ тени, ҫынна ҫын, пуйан ҫухӑна пусмӑрласа пурнас йӗркене пӗтерни пулаҫ вӑл. Пӗтӗм ирӗк Канашсен аллине куҫнӑранпа епир пысӑк утӑмсемпех сотсиализӑма пурнӑҫа кӳртсе пыратпӑр.

Сотсиализӑм тесе, хулари хапӑк-савӑтсем, машшинсем суту-илӳ ҫуръӗсем ӗҫлекенсен аллине кайнине, йалта пӗтӗм ҫӗр, инвенттар, тата ытти йӑпаласем те хресҫенсен аллине кайнине, хӑйсен ҫӗрӗ ҫинҫе комунӑ хуҫайствӑ тунине калаҫҫӗ.

Пӗтӗм ирӗк Канашсен аллине кайни етем пуйана-ҫухӑна уйӑрӑлса пурнас йӗрке пӗтнине пӗлтерет. Пӗр пӗрне ҫаратса пурнас вырӑнне, Канаш ирӗкӗнҫе пурте йӗркеллӗ, пӗр планпа ӗҫлесе пӗтӗм патшалӑха усӑ туса пурнаҫҫӗ. Йерепенех ирӗк теннӗ самӑх та хӑйӗн никӗсне ҫухатса пыраҫ. Сотсиализӑмлӑ Канаш Республикинҫе пӗтӗм ирӗк йӗркеллӗ, ирӗклӗ Комунӑсен пӗрлешӳвӗ пек пулмалла. Ирӗкӗн комуна хуҫайствине йӗркелесе ҫеҫ пымалла.

10. Раҫҫей Республикки—Раҫҫейри Сотсиализӑм йӗркипе пӗрлешнӗ ӗҫлекен халӑхӑн ушкӑнӗ. Раҫҫей Хветератсийӗн Сотсиализӑмпа Канаш Республикки-нҫе пӗтӗм ирӗк, хулари-хула, йалти-йал Канашӗсен туса пӗрлешнӗ ӗҫлекен халӑх аллинҫе.

Пӗтӗм ирӗк хӑй ӗҫленипе тӑранса пурӑнакан ӗҫ халӑхӗн аллинҫе пулмалла, ҫын тарӑпе, йунӗпе тӑранса пурна-

кан вăрă-хурахсен аллинҫе пулмалла мар. Ĕлĕкхи пек ирĕк пĕҫĕкҫеҫҫĕ ушкăн выҫă кашкăрсен аллинҫе мар, пĕтĕм патшалăхри ĕç халăхĕн аллинҫе пулмалла. *Ĕç халăхĕн çемйинҫе улпутсемпе пуйăн-кулаксене вырăн памалла мар. Халĕ те çитет ĕнтĕ çип-çĕленсене хамăр çурăм (каçан) çинҫе йăвалантарни.*

Ĕçлекенсемпе хресьенсене уҫретитĕлĕни пухупа улталаса каллех вĕсен мăйĕсен çине улăхса ларасшăн пулҫĕç, тĕрлĕ майсемпе, хитре сăмахсемпе ĕç халăхне улталама тытăҫҫĕç, анҫах кашни кунах праçник килмест çав. Раççей пролеттарисĕмпе хресьенсем айаккалла кайрĕç те: мул хуçисен, тĕрлĕрен улпут йăх-йăхĕсен, суйа меньшевиксемпе эсэрсен çемйине ĕç халăхĕн хутшăнмалла мар, терĕç. Енир хамăрах йалти, хулари канашсем урлă патшалăх ирĕкне тытса тăрăпăр, терĕç.

11. Тĕрлĕрен натсисем пурнакан оплăçсенҫе пĕр натсин йăлисем тепĕр натсин йăлисенҫен уйăрăлса тăраççĕ пулсан, оплăçĕн Канашĕсем нĕрлесе ахтономиллĕ сойуссем тума пултараççĕ; çак сойуссен ĕçĕсене оплăçсен Канашĕсен Сийесĕ туса тăрат. Çак ахтономиллĕ Сойусен Хветератси йĕркине Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Р. спупликкине кĕреççĕ.

Ирĕке тухнă Раççей ĕç халăхĕ уйрăм оплăçре пурăнакан халăха, сăмахран Туркестанри халăха хăй оплăçĕнҫе

хӑй пӗлнӗ пӗк пурӑнма ирӗк парат. Çав оплӑçре кӑркӑс, сарттӑ халӑхӗсем нумайрах пулсан, çав халӑхсене хӑйсем пӗлнӗ пек Канаш Раççейӗн тӳре-шарипе çыхӑнса тӑма ансатрах.

Вӗсем хӑйсен нушисене, хӑйсене мӗн кирлине тӗпри тӳре-шарарон лайӑхрах пӗлеççӗ, çавӑнпа вӗсене ваљљи уйрӑм пӗрлешӳсем, оплӑçсӗм тусан авантарах. Анђах çавнашкал пӗрлешӳсен Сотсиалисӑмлӑ Раççей Респупликкинђен тухмалла мар.

12. Раççей Хветератсийӗн Сотсиалисӑмпа Канаш Респупликкинђе ђӑн аслӑ ирӗк Пӗтӗм Раççейри Канашсен Сйесӗ аллинђе. Сйес саланнӑ вӑхӑтра-вӑл суйланӑ Пӗтӗм Раççейри Ӗç тӑвакан Комиттет аллинђе.

Нарс уйӑхӗнђи револђутсиђђен папшалӑхра ђӑн аслӑ ирӗк камаллинђе пулнӑ? Патшапа Распуттин, татӑ вӗсен хурӑнташӗсен аллинђе.

Вӗсем ӗç халӑхӗпе тем те тума пултарнӑ, мӗлйунӗпе вӑрçа вилме илсе кайнӑ, пӗр айӑпсӑрах лайӑх çынсене Çӗпӗре пуç йанӑ, рускӑсеипе çаптарнӑ, хӗненӗ.

Йуна уйӑхӗнђи револђутси пуçланиђђен ирӗк кам аллинђӗ пулнӑ? Мул хуçисемпе тӗрлӗрӗн вӗт-шӑкӑр пуйансен аллинђе.

Вӗсем темиçе мӗлйун ӗç халӑхне пӑхӑнтарнӑ, патша вӑрçине татах малалла тӑснӑ, мул ирӗкне сыхланӑ.

Халĕ пĕтĕм ирĕк Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесĕ аллипе куçрĕ, Распуттин, унтан Миљуккăх, Керенски туса тăнă ĕçе Раççейĕн пур кĕтессинђен те пуçтарнакан ĕç халăхĕн шанђăклă çыннисен Сйесĕ туса тăрат.

Канашсен Сйесĕ хăй салансан ĕçе йĕрклесе тăма Пĕтĕм Раççейри Ка ашсен. Ĕç тăвакан Комиттет суйласа хăварат, çав комиттет вара тепĕр Сйес пухăнађђен тĕтĕм Раççейри ĕç халăхĕн пурнăçне тытса тăрат.

Ђăннипе, çак Сйес-ĕç халахĕ суйланă çынсен парламенђĕ

13. Тĕн тĕлĕшĕнђеи кашни ĕçлекен çыннăн хăйĕн ирĕкĕ пултăр тесе, ђиркӳ патшалăхран уйăрлат, шкул ђиркӳрен уйăрлат. Тĕн çинђен те, тĕне хирĕç те халăх хушшинђе вĕрентме кашни çыннах ирĕк.

Мĕн ĕмĕртеннех пупсемпе манахсем тĕттĕм халăха ултав сăмахĕсем çитерсе, леш тĕнђери пурнăçпа хăратса пурăннă. Темле „хăват тăвакан ђĕрĕ çветтуй ӳђĕсемпе“ улталанă. Пупсене ĕненекен амăшĕсем вара хăйсен ађисене çуралсанах сăх-сăхма, çук турăран хăраса пурăнма вĕрентнĕ. Мĕн пĕђĕкренех хăрама вĕреннĕ ађа, ӳссе çитсе, авлансан та çук турăран хăраса пурăннă. Çĕр улпуђĕ хресђенсене темĕн ђул хĕненĕ, тар йухса, шалт ывăнса, вăйран кайађђен ĕçлеттернĕ, салтака панă, унăн арамĕпе ађисене асаплантарнă, кулнă, мăшкăланă; пуп çав тăлăх арăма тата: турра кĕл тăвăр, турă сире пăрахмĕ, кунти ĕçсемшĕн леш тĕнђере тавă-

рĕç, тесе ђунне лăплантарнă. Ĕç халăхне тĕттĕмре усрас тĕлĕшпе улпутсене пупсем питĕ нумай пулăшнă.

Пуйансем халăха улталамалли питĕ ђаплă, хитре ђиркӳсем лартса панă. Пупсем вара алттар умне тухађђĕç те,— ђухăн, пуйана пăхăнса пурăн, тени çинђен вĕрентеђђĕç. Ђăннипе, пупсем турра кĕл тума мар, улпутсене, тĕрлĕрен кулаксене пăхăнса пурăнма вĕрентнĕ. Ђиркӳсемпе пупсем мул, тата Керенски патшалăхĕсене çеç кирлĕ пулнă, çав патшалăхсем ђиркӳсемпе мăнастирсемшĕн тем ђухлĕ укçа пĕтернĕ. Пупсем патшалăхран шалу илнипе тăранман, прихутри çынсене те вĕсем нумай çаратнă.

Халĕ ĕçлекенсемпе хресђенсен тӳре-шари пупсене текех патшалăхран шалу памасť. Ђиркӳ вăл турра ĕненекенсен пĕрлешӳвĕ, тĕнĕ те—харпăр çыннăн ĕçĕ. Тӳре-шарана патшалăхри пĕтĕм халăх ĕçне тунă ђухне ђиркӳ кирлĕ мар, унăн ытти уйрăм уђрештенисем пур. Ђиркӳ турра ĕненекенсен аллине куçмалла, çав çынсен ăна хăйсен вăйĕпе тытм лла. Мул патшалăхĕнђе тата ђиркӳпе пĕр ретре шкул тăнă. Микула патша тӳре-шари пĕтĕм ĕç халăхне тĕттĕмре усрама тăрăшнă, çапла туни вăл патшине хăйне те, тата ытти пуйан улпутсемпе кулаксемшĕн те пит тупăшлă пулнă. Тĕттĕм халăха ђуралăхра усрама вĕреннĕ халăхран çăмăлтарах. Çавăнпа Раççейре ĕлĕк хупахсем шкулсенђен темиçе хут нумай пулнă, шкулсенђе те çитменнине çамрăк пуçсене çук турă çинђен каланă сăмахсемпе имретнĕ. Йалсенђе пуринђен ытла ђиркӳллĕ шкулсем нумай пулнă, çавăнпа вĕрентекенсем те ӳсĕр çӳрекен пупсем, вĕсен ывăлĕсемпе хĕрĕсем

нумайтарах пулнă. Шкулсене ĕлĕк пуринҫе ытла пуп çурҫĕсемпе ҫиркӳсен çывăхĕнҫе лартнă.

Канаш Респупликкинҫе апла пулмалла мар, шкула ҫиркӳрен ӳйăрмалла. Шкулта пур вак халăхсен аҫисем те вĕренмелле. Хулари ĕçлекенсемпе йалти ҫухăнсен аҫисем сотсиалисăмлă респупликкăра пур шкулсенҫе те укçасăрах вĕренеççĕ. Аслă шкулсене кĕме пĕлни çеç кирлĕ.

14. Ёçлекен халăха хăй мĕн шухăшланине калама ҫăн ирĕк пултăр тесе, Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респупликки çыру кăпитала пăхăнассине пĕтерет те. ĕçлекенсен класĕпе ҫухăн хресҫенсен аллине хаçатсем, кĕнекесем, прошшурăсем тата ытти машшинпа çаптарнă йапаласене кăларма пур техниккă таврашĕпе ытти мĕн кирлине пĕтĕмпех парат, тата вĕсене пĕтĕм патшалăхĕпе ирĕклĕ çырма пулăшат.

Мул ирĕкĕ çийелте ҫухне пĕтĕм кĕнекесем, хаçатсем, шурналсем пуйансен аллинҫе пулнă. Вĕсен кĕнеке-хаçаҫĕсем халăха тĕттĕмлетес тĕлĕшпе хĕçпăшал пекех пулнă.

Çырасса пуйансен хаçаҫĕсене „халăх йаҫĕпе“ çырнă, ĕçлекенпе хресҫене çав наркăмăша пĕрер пуса сутнă.

Пупсемпе вĕсен шкулсене халăха тĕттĕмлетес тĕлĕшпе пуйансен кĕнеке-хаçатсем нумай пулăшнă, халăхăн вĕренекен аҫисене:—пуйансене хисеплĕр, аслисене илтелĕр, турра кĕл тăвăр тенĕ сăмахсене темиçе хут вула вула кăтартнă.

Çак наркăмăша пăҫах пĕтерес тесе, Канаш ирĕкĕ кĕнеке-хаçат çырас ĕçе ĕç халăхĕн аллине патӳ.

Çавăнпа кĕнекесĕм çапма кирлĕ хатĕрсем типокрахвисем ĕç халăхĕн аллине куçрĕç.

Сотсиалисăмлă Раççейре мул ирĕкĕ майлă кĕнеке-хаçатсем, шурналсем çапмалла мар. Пур ĕç те ĕçлекенсемпе хресҫенсене йурăхлă пулмалла.

Кĕнекесем, хаçатсем, шурналсем ĕç халăхне ĕмĕрхи тăттăмлăхрен кăларас тĕллĕпе усăллă йăнăласем пулмалла.

15. Ĕçлекен халăха пухусем тума ҫăн ирĕк пултăр тесе, Канаш Республикки краштанĕсем пухусем, миттинксем, халăх утăвĕсем, тата ыт. те тума ирĕклĕ тесе, Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикки ĕçлекенсен класĕпе ҫухăн хресҫенсен аллине халăх пухĕ тума йурăхлă çуртсене тытăн-тăван йăпалисемпе, ăшăтса çутатса парать.

Патша вăхăтĕнҫе сотсиалисем хăйсен пуххисене вăрмансенҫе политсисем курман çырмасенҫе, тата ытти улах вырăнсенҫе туна. Çав вăхăтрах пуйан улпутсем хăйсен пуххисене тем тĕрлĕ ҫапла çуртсенҫе, клупсенҫе туна.

Нарс уйăхĕнҫи революцути хыççăн ĕçлекенсем те Керенски тӳре-шаринҫен хăрасах каймарĕç, вĕсем те пуйансем пекех пухусем тума пуçларĕс.

Анҫах ĕçлекенсен вăйĕсем ӳссе пынине кура, ҫăн сотсиалис-комуниссене пухусем тума ҫара пуçларĕç, вĕсен пуххисене хăваласа салатса йама тытăнҫĕç.

Ĕçлекенсемпе хресҫенсен утăвĕсене хĕç-пăшалсемпех пĕтерме пуçларĕç. Йалсенҫе пуйансем ҫухăнсене хваттерсем памарĕç, улпут ҫурҫĕсем умне солтаксем тăратрĕç.

Анҫах ĕç халăхĕн ҫăн революцийĕ пулҫĕ. Улпутсен çутă, ăшă пулĕмĕсем хулари ĕçлекенсемпе йалти ҫухăнсен аллине лекрĕç.

16. Пуршуаçи йĕркипе пурнакан ушкăнра пуйансен ирĕкĕ ку таранҫҫен ĕçлекенсемпе хресҫенсене пĕрлешсе ушкăн тума канçĕрлерĕ. Пуйан классен ирĕкне экономипе политтикĕ тĕлĕшĕнҫен те çĕмĕрсе, ĕç халăхне пĕрлешсе ушкăнсем тума ирĕк пултăр тесе, Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикки ĕçлекенсене, ҫухăн хресҫенсене ушкăнсем туса пĕрлешме укçана та, урăх майсемпе те пулăшать.

Ĕçлекенсемпе хресҫенсен хушшинҫи тистсиплинă çирĕплетсе хытарас тĕлĕшпе ĕçлекенсен прохвеççи сойусĕсем шанҫăклă орканисатсисем пулмалла.

Патша вăхăтĕнҫе ĕçлекенсем пĕрлешсе ушкăнсем тума пултарайман, политтикăпа ĕçне хутшăнмасан çеç вĕсене ушкăнсем тума ирĕк панă.

Пуйансемсĕр пуçне, меншевиксемпе ессерсем те Канаш ирĕкĕ майлă ĕçлекенсен ушкăнĕсене пит хĕсĕрленĕ.

Халĕ ĕçлекенсен ушкăнĕ Канаш ирĕ ĕ майлă пулмалли çинҫен сăмахламалли те çук халĕ сотсиалисăмлă хуçайства

лайăхлатас тĕлĕшпе пур ĕçлекенсене те ушкăнсемпе пĕрлешмелле тăвассине хăйĕн тĕп ĕçĕ вырăнне хураҫ.

Шкула ҫиркӳрен, пупсемпе ӳсĕр çӳрекен ҫеҫуксенҫен уйăрнă хыççăн ĕçлекенсемпе хресҫенсен тӳрĕ пĕтĕм ĕç халăхне тĕрлĕрен ăслăлăхсемпе паллашма ирĕк параҫ, вăй ситнĕ таран пулăшаҫ.

Хапăк-сăвăтсенҫи ĕçе йĕркелеме инженерсемпе техниксем, тĕрлĕрен ĕç ăстисем кирлĕ. Çак ĕçсене халĕ пуринҫен ытла камсем туса тăраççĕ? Пролеттарисен, ĕç халăхĕн ирĕкне йуратман çынсем. Пурте вĕсем йу а уйăхĕнҫи революцин пуринҫен Канаш ирĕкне хирĕç таҫтăç. Çĕрĕçне, йал хуçайст-

17. Малашне ĕçлекенсем вĕренсе тĕрлĕ ăслăлăхсем пĕлҫĕĕр тесе, Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикки ĕçлекенсемпе ҫухăн хресҫенсене пурне те тĕпĕ-йĕрĕпех пĕр укçасăр вĕрентмелле тăвассине хăйĕн тĕп ĕçĕ вырăнне хураҫ.

вине хӑпартма акрономсем, мишавайсем, контухтӑрсем, каскалакан ӑстасем кирлӗ.

Шкулсенҫе пӗҫӗк аҫасене вӗрентме лайӑх вӗрентекенсем кирлӗ.

Çтан-ха вӗсене тупмалла? Хулари промышленнӑçпе йал хуçайствине лайхлатма ӗçлекенсемпе хресҫенсем хӑйсемех лайӑх пӗлмеççӗ-ши? Сотсиалисӑмлӑ рес упликкӑра ҫӗҫӗ аҫисене лайӑхрах пӑхса ӳстерекенсем çав аҫасен амӗшӗсӗмех мар ши?

Çавӑнпа та ӗçлекенсемпе хресҫенсем ваҫҫи тӗрлӗрен аслӑ шкулсем, универçиттетсем, техниккумсем, ӗç ӑстисем хатӗрлекен шкулсем уçмалла.

Тӳре-шара та çак тӗлӗшпе нумай ӗç турӗ, йупа уйӑхӗнҫи революҫутси пуçланнӑ вӗркунненех ӗç халӑхӗн аҫисене тӗрлӗрен аслӑ шкулсен алӑкӗсене йарах уçса паҫӗ. Халӗ кашнӑ ҫухӑн аҫи сас паллисемсӗр пуçне, ӗлӗк улпут аҫисем вӗренӗ ӑслӑлӑхсемпе паллашма пултарат.

18. Респупликкӑра пурнакан пур çын та ӗçлемелле тесе, Раççей Хветератсийӗн Сотсиалисӑмпа Канаш Респупликки çак лосунка вӗлтерет: Ӗçлемен çын ан çитӗр!

Ӗлӗк мӗн ҫухлӗ харам пырсем пулнӑ? Мӗн ҫухлӗ вӗсем йут патшалӑхсенҫе пылпӑ çу ӑшӑнҫен пылпа çу ашӑнҫе ишсе çӳренӗ?

Вӗсем çӗрӗсем çинҫе Раççей ӗç çыннисем пилӗкӗсене авса, йулашки тар йухиҫҫен ӗçленӗ.

Харам пырсен, кахалсен пурнăçне вилĕм çапрĕ. Ĕçлесе пурнакан çеç çăкăр çиме пултарать. Вăй питти çынсем ахалех кахалланса ĕçлемеççĕ пулсан, вĕсенне патша ӳхне тупнă туприне туртса илмелле. Ун пек кахалсене çывăрма памалла мар.

19. Ĕçлекенсемпе хресҫенсен аслă революцийĕ вăрçса илнĕ иртĕксене сыхлавлă усрас тесе, Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикки, Республиккăра пурнакан çынсен пуринĕн те сотсиалисăм йĕркипе тунă патшалăха хăйсен сыхламалла тесе, пурне те çар ретне тăратмалла тăваť. Алăри хĕç-пăшал тытса революцийе хăтарас ҫислă, хисеплĕ ĕç ĕçлекен халăх аллинҫе çеç пулмалла, ытти ĕçлемен çынсене çарта урăх ĕç тутармалла.

Пурнăç кăтартнă тăрăх, ĕçлекенсемпе хресҫенсен патшалăхĕ тăшмансенҫен сыхланмасăр пурăнма пултараймасť. Ана йĕри-тавралăпех шурă патшалăхсем хупăрласа илнĕ.

Сотсиалисăмлă Республиккăна çухатас мар тесен, ăна çирĕплетес тесен тăшмансенҫен хытă сыхланмалла.

Йалсенҫе çĕр ĕçлекен комунăсем пулаççĕ, хуласенҫе хапăк савăтсем ĕçлекенсен аллине кайаççĕ. Тăшмансенҫен лайăхрах сыхланмасан мĕн пулаť-ха вара? Çав пурлăхсем пĕтĕмпех тăшмансен аллине кайаççĕ.

Çапла никам çине шанмасăрах пирĕн вăйлă, тĕреклĕ çар тумалла, пурин те хĕç-пăшал тытма вĕренмелле, хăрушă

вăхăтра пĕр пăркаланмасăрах хапрăк-савăтсене, çĕре, Канаш ирĕкне тăшмансенҫен сыхлама каймалла. Йалта йе хулара пурăннă вăхăтрах кашни хресҫенĕн, ĕçлекенĕн вăрçа ĕçне вĕренмелле. Кашни ĕç çыннин хуҫ те хăçан та сотсиалисăм ирĕкне кăкăрпа сыхлама хатĕр пулмалла.

Сотсиалисăмлă Канаш Республикĕн çарĕнҫе ҫухăнсене çеç вырăн памалла. Харам пырсем-пуйансем, кулаксем, пупсем хĕç-пăшал йăтма тивĕç илмеççĕ. Вĕсене Хĕрлĕ Çарта оккопсем ҫавтармалла, касăрмасене тасаттармалла.

Ĕçлекенсенне хресҫенсен тӳре-шари пур пуйансене те Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçре ĕçлеттерет. Ĕçрен пăрăнакансене ҫăнлăхпа хытă айăплаҫ.

20. Пур патсисен те ĕç çыннисем пĕр шутлă тесе, Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикки Раççей Республикĕнҫе ĕçлесе пурăнакан йут патшалăх çыннисене те-вĕсем ĕçлекен халăх хушшинҫен, йе çын тара ҫытса ĕçлеттермен хресҫен хушшинҫен тухнă пулсан, Раççей çыннин политтикĕ тивĕçлĕхне параҫ. Вырăнти Канашсене, ун пек йут патшалăх çыннисене пĕр ҫăрмантармасăр Раççей краштан тивĕçлĕхне пама ирĕк параҫ.

21. Йут патшалăхсенҫе тĕн тĕлĕшĕнҫен, йе политтикĕ тĕлĕшĕнҫен айăпланакан çынсене Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикки хӳтĕлĕк параҫ.

Мпкула патша ђухне Раççейре тем ђухлĕ йут патшалăхсен мул хуçисем, çпеккуљантсем тупăш тупса пурăннă, анђах ревољутси ђирне илсе килесрен хăраса, йут патшалăхсенђи ĕçлекенсемпе хресђенсене Раççейра пурăнма ирĕк паман. Ун вырăнне Раççей ĕçлекенсемпе хресђенĕсене Америккă, Храитси, Кермани мул хуçисем ăратлансах хăйсем патне ĕçлеме илнĕ, мĕншĕн тесен вĕсем хуçасемпе хирĕçсех кайман, йывăрлăхсене йăвашшăнах тӳссе иртернĕ. Анђах халĕ каллех урăхла. Йевроппăпа Америккă мул хуçисем пĕр çухрăмран хăйсем патне Раççей ĕçлекенсемпе хресђенсемпе йамăссĕ, сотсиалисăм ђирне илсе пырасран хăраççĕ. Çитменнине тыткăна килнĕ салтаксене те хăйсен çĕр-шывне йама иккĕленеççĕ. Хăйсем, пĕр Канаш Раççейĕсĕр пуçне, таçти çĕр-шывра та çапкаланса çӳреççĕ.

Канаш Раççейĕн тӳре-шари йут патшалăхсенђи ĕçлекенсене Раççейра ĕçлесе пурăнма пĕр сăмахсăрах ирĕк парат̆, анђах ĕçлекенсем-харам пырсем валли Канаш Раççейĕнђе вырăн çук.

Мул ирĕкне пĕтерме тытăннăшăн тарса пурнакан йут патшалăхсенђи ĕçлекенсем, хресђенсем, салтаксем ваљљи Раççейра вырăн пур. Сотсиалисăмшăн кĕрешекенсене Канаш Раççейĕн тӳре-шари хĕрхенет, вĕсене вăл пулăшат̆.

22. Тĕрлĕ рассă, тĕрлĕ натсисем пурте пĕр тивĕçлĕ тесе, Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респупликки хăш рассине, йе хăш натсине те пулин нумайтарах хисеп туса мала хуни, йе

пĕҫĕк натсисене хĕстернипе вĕсен ҫăн тивĕҫлĕхне пĕҫĕклетнипе Республикăн тĕп саккунне хирĕҫ пынипе пулать, тет.

23. Пĕтĕм ĕҫлекен халăхшăн тăрăшса, Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикки уйрăм ҫынсенҫен, йĕ уйрăм ушкăнсенҫен хăйсене папă прĕкпе сотсиалисăмлă революцийĕ хирĕҫ пыраççĕ пулсан, вăл ирĕксене илет.

Раççейра вырăссемсĕр пуҫне, тата тĕрлĕрен вак халăхсем пур наççĕ. Микула патша ҫухне Христус тĕнĕпе пурăнман халăхсене, пуринҫен ытла йĕврейсене хытă хĕсĕрленĕ, вĕсенҫен мăшкăласа кулнă. Пуринҫен ытла ҫухăн ĕҫ халăхне нумай пусмăрланă. Тĕрлĕ натсисен пуйăнĕсем Христус тĕнне тытман пулсан та, Раççей мул хуҫисем вĕсене тивмен, хăйсен тăванĕсем вырăнне хунă. Сотсиалисăмлă Канаш Республикĕнҫи Христус тĕнĕпе пурăнман натсисене пусмăрлас йĕркке пĕтмелле. Пур халăх та пĕр тивĕҫлĕхпе пурăнмалла.

Анҫах ĕҫ халăхне хирĕҫ пыракан пур натсисен уйрăм сыннисемпе ушкăнĕсене Канаш Раççейĕн тӳре-шăри пĕрте хĕрхенмест. Контр революционера—йĕврей-и, палак-и вăл, пур пĕрех нимле каҫару та ҫук.

Пĕтĕм Раççейри Ĕçлекенсен, Хресҫенсен, Касаксен тата Хĕрлĕ салтаксен Тĕпутаҭĕсен Канашĕсен Сĕвĕ ҫинҫен.

24. Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республиккинҫе ҫăн пысăк ирĕк Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сĕвĕ аллинҫе.

25. Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сĕвĕсне хуласенҫи Канашсем хăйсене суйлакан 25.000 ҫын пуҫне пĕр ҫын йараççĕ, кĕпĕрнери Канашсен Сĕвĕсĕсем хăйсене суйланă 125.000 ҫын пуҫне пĕр ҫын йараççĕ.

Перремĕш хушса калани: Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сĕвĕ пуҫтарнас умĕн кĕпĕрнери Канашсен сĕвĕсĕсем пулмасан, тӳрех уйĕсри Канашсем йараççĕ.

Иккĕмĕш хушса калани: Оплăҫри Канашсен Сĕвĕ Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сĕвĕсне пуҫтарас умĕн пулсассăн, телекатсене ҫав оплăҫри сĕвĕсех суйласа йама пултараҭ.

26. Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сĕвĕсне Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Комиттет ҫулталăк хушшинҫе 2 хутран кайа мар пуҫтармалла.

Республиккăра ҫăн асăлă ирĕк—Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сĕвĕ.

Мĕне пĕлтерет-ха вăл?

Вăл, Республикăна пĕр пĕҫĕкҫеççĕ пуйансем ушкăнĕ мар, пĕтĕм республикăри ĕç халăхĕ тытса тăнине пĕлтерет. Канашсен Сйесĕ-ĕç халăхĕ суйланă шанҫăклă ҫыннисен парламĕнҫĕ. Ҫав Сйеса кашни ĕç ҫынни ҫын суйласа йама пултараҫ. Урăхла пулма та пултараймаҫ. Сйесра пурнăҫра кирлĕ ĕҫсене ҫеç сӳтсе йаваҫҫĕ, ҫавăнпа унта ĕç халăхĕн шанҫăклă ҫыннисем пулмалла. Кашни ҫав Сйеса ҫын сӳйласа йараканăн Сйесĕ мĕнле йĕркесемпе пухнине, ҫынсене мĕнле суйласа йарас йĕркене лайăх пĕлмелле.

Ҫынсене Сйеса ак ҫапла суйлаҫҫĕ: Саратту хули Канашне 300.000 ҫын 300 ҫын ĕçлеме суйланă пулсан, Саратту хули Канашĕ Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесне, хăйне суйлакан 25.000 ҫын пуҫне 1 ҫын суйласа йамалли шутпа илсе, мĕн пурĕ 12 ҫын суйласа йараҫ.

Хулари ҫынсем суйласа йанă ҫынсĕмсĕр пуҫне, Сйесра тата хресҫенсем суйласа йанă ҫынсем те пулмалла. Ҫавăнпа Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесĕ пуҫтарнас умĕн (Сйес пухăнмалли вăхăта малтанах пĕлтереççĕ) кашни кĕпĕрнере кĕпĕрнери Сйессем пулса иртеççĕ, ҫав Сйессенҫе вара Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесне ҫынсем суйласа йараççĕ. Кĕпĕрнери Сйесри ҫынсене 500.000 ҫын суйласа йанă пулсан, Пĕтĕм Раççейри Сйеса 4 ҫын суйласа йараççĕ (125 пин ҫын пуҫне пĕр ҫын).

27. Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комитет хăй пуҫласа пуҫтарас тесен, йе Республикăра пурнакан ҫынсен виççĕмĕш пайĕ суйланă вырăнти Ка-

нашсем ыйтсан, Пĕтĕм Раççейри Канашсен Васкавлă Сйесĕ пуçтарăнаť.

28. Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесĕ Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комиттет суйласа хураť. Унта 200 çынтан ытла суйламалла мар.

29. Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комиттет хăй ĕçĕсемшĕн Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесĕ умĕнъе, хисеп параť.

30. Канашсен Сйесĕсем хушшинъе Республикăра ъăн ныcăк ирĕк Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комиттет аллинъе.

Йĕркене тăрăх кашни 6 уйăхран Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесĕсем пулса иртеççĕ. Çапла Канашсен 5-мĕш Сйесĕ 1918-мĕш çулта утă уйăхĕн 10-мĕшĕнъе, 6-мĕш Сйесĕ 1919-мĕш çулта кăрлаъăн 10-мĕшĕнъе пулса иртнĕ. Анъах хăш ъухне çав йĕркене пăхмасăрах Васкавлă Сйессем пулса иртеççĕ. Уи пек Сйессем Республикăра питĕ палăк, халăхран ыйтса тумалли ĕçсем тупăнсан пулаççĕ. Çапла Канашсен 4-мĕш Сйесĕ Претски килĕшӳвĕ йышăнасси çинъен халаçма пуçтарăннă.

Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесне Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комиттет пуçтараť, çав Комиттета Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесĕ суйласа хăвараť. П. Р. Ĕç тăв. Т. К. Канаш Раççейĕн ун шанъăкла çыннисем 200 çын кĕрет. Сйес салансан, П. Р. Ĕç тăв. Т. К. Сйес йышăннă постановлени-

сене ĕçе кӳртсе пыраť, мĕн пур ĕçĕсемшĕн Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сĕнĕсĕ умĕн ӕехисеп параť.

Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комитет çинӕен.

31. Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикккинӕе саккунсем кăларакан, хушса, тĕрĕслесе тăракан оркан Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комитет пулаť.

32. Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комитет ĕçлекенсемпе хресӕенсен тӳре-шарине, Канашсен пур орканĕсене ĕçлеме çул кăтартса тăраť: саккун кăларас ĕçе, йĕрке тытса тăрас ĕçе пĕрлештерсе, майлаштарса пыраť; Канашсен конституцине, Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сĕнĕсĕсем, тата Канашсен Тĕп тӳре шари орканĕсем йышăнса хушнине пурнăçа кӳртнине астуса тăраť.

33. Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комитет Халăх Комиссарĕсем, уйрăм ветăмствăсем кăларас текретсене, тата урăх проектсене пăхса йышăнаť. Текретсем, хушусем хăй кăлараť.

34. Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комитет Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сĕнĕсне пуçтараť, ăна хăй

ӗҫӗсем ҫинҫен хисеп параҫ, пӗтӗм политтикка ҫинҫен, тӗрлӗ ыйтусем ҫинҫен каласа параҫ.

35. Раҫҫей Хветератсийӗн Сотсиалисӑмпа Канаш Республиккинҫи ӗҫсене тытса тӑма Пӗтӗм Раҫҫейри Ӗҫ тӑвакан Тӗп Комиттет Халӑх Комиссарӗсен Канашне суйлаҫ, тата тӗрлӗрен ӗҫсене пӑхса тӑма Ҫайсем (Халӑх Комиссариаҫӗсем) тӑваҫ.

36. Пӗтӗм Раҫҫейри Ӗҫ тӑвакан Тӗп Комиттетӑн ҫленӗсем Пайсенҫе (Халӑх Комиссариаҫӗсенҫе) ӗҫлеҫҫӗ, йе Пӗтӗм Раҫҫейри Ӗҫ тӑвакан Тӗп Комиттет хушса уйрӑм ӗҫсене тӑваҫҫӗ.

Пӗтӗм Раҫҫейри Ӗҫ тӑвакан Тӗп Комиттет саккунсем, хушусем кӑлараҫ, Канаш орканӗсенҫи ӗҫсене астуса тӑраҫ.

Республиккӑн ҫи аслӑ ирӗкӗ—Пӗтӗм Раҫҫейри Ӗҫ тӑвакан Тӗп Комиттет тӗпри тӳре-шарапа уйрӑм Халӑх Комиссариаҫӗсенҫи ӗҫсем Пӗтӗм Раҫҫейри Канашсен Сийесӗ йышӑннӑ постановленипе Республиккӑн конститутсийенҫен тухса кайса, урӑх ҫулпа пырасран хытӑ астуса тӑраҫ.

Пӗтӗм Раҫҫейри Ӗҫ тӑвакан Тӗп Комиттет хӑйӗн ҫленӗсенҫен Халӑх Комиссарӗсене уйӑрса хураҫ, ҫав Комиссарсем Пӗтӗм Республиккӑра ӗҫсене туса тӑраҫҫӗ.

Пӗтӗм Раҫҫейри Ӗҫ тӑвакан Тӗп Комиттет Пӗтӗм Раҫҫейри Канашсен Сийесне пуҫтарма хатӗрленет, ҫав Сийесра тумалли ӗҫсене хатӗрлет.

Пӗтӗм Раҫҫейри Ӗҫ тӑвакан Тӗп Комиттетӑн ҫленӗсем

уйрăм Пайсенҫе (Халăх Комиссариаҫĕсенҫе) йе Комитет тума хушнă ĕҫсене туса тăраççĕ.

Халăх Комиссарĕсен Канашĕ ҫинҫен.

37. Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикĕн пур ĕҫĕсене Халăх Комиссарĕсен Канашĕ пăхса тăрать.

38. Çав тăвас ĕҫсене пурнăҫа кӳртесшĕн Халăх Комиссарĕсен Канашĕ текретсем, хушусĕм, инструксисем кăларать, тата патшалăх пурнăҫĕ йĕркеллĕ, хăвăрт пыма май кирлине пурне те тăвать.

39. Халăх Комиссарĕсен Канашĕ хăйсен ĕҫĕсем ҫинҫен Пĕтĕм Раççейри Ĕҫ тăвакан Тĕп Комиттета хăвăрт пĕлтерсе тăрать.

40. Халăх Комиссарĕсен Канашĕ йышăннă ĕҫсене Пĕтĕм Раççейри Ĕҫ тăвакан Тĕп Комиттет улăштарма та, ҫарса тăма та пултрать.

41. Халăх Комиссарĕсен Канашĕ хăй тума йышăннă ĕҫсене, хушусене, вĕсем политтикĕ тĕлĕшĕнҫен пит пысăк ĕҫсем пулсан, малтан Пĕтĕм Раççейри Ĕҫ тăвакан Тĕп Комиттета пăхтарса йышăнтарать.

Хушса калани: Нумайҫĕн кĕтмелле мар ĕҫсем пулсан, Халăх Комиссарĕсен Канашĕ ун пек ĕҫсене хăйех тăвать.

Халăх Комиссарĕсен Канашĕ пĕтĕм Республикăна тытса тарать, патшалăхри пурнăҫа йĕркеллĕ пыртарать. Халăх Ко-

миссарĕсем Сотсиалисăмлă карашăн рулĕсем пек. Халăх Комиссарĕсен Канашĕ хăйĕн пур ĕçĕсемшĕн те П. Р. Ĕç тăв. Т. Комитетăн ҫленĕсене, халăхăн шанҫăклă ҫыннисене хисеп параҫ. Ĕлĕк министăрсем хăйсен ĕçĕсем ҫинҫен халăха хисеп паман, пуйăн хуҫасен хушувĕсене ҫеç пурнăҫа кӳртсе пынă.

Халĕ Халăх Комиссарĕсен Канашĕн хăй тума йышăннă ĕçсем ҫинҫен Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Комиттета пĕлтерсех памалла пысăкрах ĕçсене ҫав Комиттета пăхтарса йышăнтармалла.

42. Халăх Комиссарĕсен Канашĕн ҫленĕсем харпăр Халăх Комиссариаҫĕ пуҫĕнҫе тăраççĕ.

43. Халăх Комиссариаҫĕсем 17 пулаççĕ. вĕсем ак ҫаксем: а) Йут патшалăх ĕçĕсен; у) Вăрҫă ĕçĕсен; н) Тинĕс ҫарĕсен; р) Республикка ăшăнҫи ĕçсен; с) Йуҫтитсин; л) Ĕç йĕркин; ш) Ҫухăнсене пулăшакан; ы) Ҫутта кăларакан; х) Пуштăпа телекрахăн; м) Вак халăхсен; т) Укҫан; ă) Ҫулсен: в) Ҫĕр ĕçĕн; п) Суту-илӳн; к) Ҫимĕç; ӗ) Патшалăхри контроль; и) Халăх Пурлăхĕн Аслă Канашĕ; е) Сывлăх.

44. Кашни Халăх Комиссарĕ хăй пуҫлăх пулса коллеки тăваҫ. Коллеки ҫленĕсене Халăх Комиссарĕсен Канашĕ йышăнаҫ.

45. Халăх Комиссарĕ хăй пăхса тăракан Комиссариат ĕçĕсене хăй пĕҫҫенех йышăнма пултараҫ, анҫах ун пек пĕҫҫен йышăннă ĕçсем ҫинҫен унăн

коллекийĕ пĕлтермелле. Коллеки вăл ĕçсем тĕлĕшĕнъен Халăх Комиссарĕпе килĕшмесен, вăл ĕçе ъарса тăмасăр, ун çинъен Халăх Комиссарĕсен Канашне, йе Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комиттетăн Президиумне пĕлтерет.

Çакăн пекех, ĕçпе килĕшеймесен, — коллекин уйрăм ъленĕсем те пĕлтерме пултараççĕ.

46. Халăх Комиссарĕсен Канашĕ Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесĕпе Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комиттета хисеп параѓ.

47. Хăлăх Комиссарĕсемпе Халăх Комиссариаъĕсенъи коллекисем Халăх Комиссарĕсен Канашĕпе Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комиттета пĕтĕм хисепе параççĕ.

48. Раççей Хветератсийĕн Снтсиалисăмпа Канаш Респупликкин пур ĕçĕсене туса тăракан Халăх Комиссарĕсен Канашĕн ъленĕсене ăнъах Халăх Комиссарĕ тесе каламалла, урăх, Канаш ирĕкĕн ĕçĕсене туса тăракансене никама та, тĕприсене те, вырăнсенъисене те ун пек каламалла мар.

Халăх Комиссарĕсем уйрăм Халăх Комиссариаъĕсене тытса тăраççĕ. Йут патшалăх ĕçĕсен Халăх Комиссаъĕ Канаш Республикин йут патшалăхсемпе сыхăнса тăрас ĕçсене пăхса тăраѓ. Вăрçă ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ пĕтĕм типĕ çĕрти çара тытса тăраѓ.

Хăҫхи вăхăтра çак икĕ комиссариатсем пит пысăк ĕçсемтуса тăраççĕ. Тĕнҫе мулĕ Канаш Республикки çине ҫарăнна вăхăтра Вăрçă ĕçĕсемпе Йут патшалăх ĕçĕсен Халăх Комиссариаҫĕсем пĕр канмасăр ĕçлеççĕ Республикăн шалти ĕçĕсен Халăх Комиссариаҫĕ пĕтĕм Республикăри шалти политикине пăхса тăраҫ, вырăнсенҫи Канашсен ĕçĕсене астуса пыраҫ; Йуҫтитсин-сут ĕçĕсене пăхса тăраҫ; Ҫухăнсене пулăшакан—ĕçлеме пултарайман, вăрçăра аманнă çынсене, ухсахсуккăрсене, ҫăлахсене пулăшу парса тăраҫ; Çулсен-ҫукун çулсене пăхса тăраҫ; Патшалăхри контроль — Халăх мулне йĕркелĕ салатса пынине, мĕн ҫухлĕ мул пухăннине астуса тăраҫ; Сывлăхăн-ĕçлекенсемпе хресҫенсен сывлăхне тирпелеме тăрăшаҫ.

17 Халăх Комиссариаҫĕсенҫен пĕри — Халăх Пурлăхĕн Асли Канашĕ, вăл пĕтĕм Республикăри хуҫайствă ĕçĕсене пăхса тăраҫ. Халăх Комиссариаҫĕсенҫи ĕçсене, ĕлĕкхи министăрсем пек, пĕр çын çеç пăхса тăмасҫ, пĕтĕм коллеки, йе Халăх Комиссарĕсен Канашĕ йышăннă пысăк ĕçлĕ çынсен пуххи туса тăраҫ.

Халăх Комиссарĕ йышăннă ĕçсемне коллеки ҫленĕсем килĕшмесен, çав ĕçсем çинҫен коллеки ҫленĕсем Халăх Комиссарĕсен Канашне пĕлтерме пултараççĕ.

Халăх Комиссарĕсен йатне илме Халăх Комиссарĕсен Канашĕсенҫи ҫлен çеç пултараҫ мĕншĕн тесен çав ҫлен хула, йе йал пуçлăхĕ мар, вăл пĕтĕм Республикăн пуçĕнҫе тăраҫ.

Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сĕнĕсĕпе Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комитетăн ĕçĕсем çинҫен.

49. Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сĕнĕсĕпе Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комитет пур патшалăхра кирлĕ ĕçсене пăхса тăрать. Вĕсем:

а) Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикĕин конституцине йышăнасси, улăштарасси, хушасси.

у) Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикĕин патшалăх тулашĕнҫине шалти политиккăна пăхса тăрасси.

в) Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикĕин ҫиккине тăвассипе улăштарасси, тата ун территорин (çĕрĕн) пайĕсене, йĕ унăн тивĕçлĕхне уйăрасси.

р) Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикĕине кĕрсе тăракан оплăçсен Канаш сойусĕсен ҫиккине, компетенттентсине кăтартса парасси, тата вĕсен хушшинҫе пулма пултаракан тавлашусене пĕтересси.

с) Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикки Канаш Республикĕин çĕнĕ Пайĕсене

кӳртессине унăн Пайӗсен Раççей Хветератсийӗнӗен пухас тенӗ шухăша йышăнасси.

л) Раççей Хветератсийӗн Сотсиалисăмпа Канаш Республиккин территорине атминистратси тӗлӗшӗне уйăрасси, тата оплăçсен пӗрлешӗ вӗсене йышăнасси.

м) Раççей Хветератсийӗн Сотсиалисăмпа Канаш Республиккинӗе виçе укçа паллисене йышăнассине улăштарасси.

н) Йут патшалăхсемпе хутшăнса тăрасси, вăрçă пуçлассипе Килӗшӳ тăвасси.

о) Кивçен илесси, тамошӗнӗпе йут патшалăхпа суту-илӳ тăвас йут патшăлăхран тавар кӳртнешӗн укçа илес йӗркепе татăлни) суту-илӳ ӗçӗ йӗркисене татса хурасси, тата хвинанс тӗлӗшӗпе килӗтесси.

п) Раççей Хветератсийӗн Сотсиалисăмпа Канаш Республиккинӗи пӗтӗм халăх пурлăхӗн, ун тӗрлӗ пайӗсен тӗп йӗркипе планне туса йышăнасси.

р) Раççей Хветератсийӗн Сотсиалисăмпа Канаш Республиккин пӳтшетне йышăнасси.

ă) Пӗтӗм патшалăхри куланайсене, патшалăхшӗн тăвас ӗç, йӗркисене тупса йышăнасси.

в) Раççей Хветератсийӗн Сотсиалисăмпа Канаш Республиккин çар вайӗн тӗп йӗркисене тупса ӗçе кӳртесси.

и) Пĕтĕм патшалăхшĕн саккун кăларасси, сутсемпе сут тăвас йĕркесене тăвасси; тĕрлĕ краштански уколовни саккунсене, тата ыттисене те кăларасси.

к) Халăх Комиссарĕсен Канашĕ ҫлепĕсене, йе Халăх Комиссарĕсен Канашне пĕтĕмпех вырăна кӳртессипе кăларса йарасси, тата Халăх Комиссарĕсене Канашĕн пуҫлăхне йышăнасси.

ť) Раҫҫейри краштан тивĕҫлĕхне кĕрессине унтан тухасси, тата Республикăри йут патшалăх ҫыннисен тивĕҫлĕхĕ ҫинҫен тĕп й рке кăтартса парасси.

и) Пĕтĕм айăплă ҫынсене, йе хăшне хăшне ҫеҫ каҫарасси (амнисти).

50. Кусемсĕр пуҫне, Пĕтĕм Раҫҫейри Канашсен Сйесĕпе Пĕтĕм Раҫҫейри Ĕҫ тăвакан Тĕп Комиттет пур хăйсем пăхмалла тесе хунă ĕҫсене пăхасси.

51. Ак ҫак ĕҫсене Пĕтĕм Раҫҫейри Канашсен Сйесĕ ҫеҫ тума пултарать:

а) Канаш конҫтитутсин тĕп йĕркине йышăнасси, хушасси, улăштарасси.

у) Шаннă ҫынсем килĕшӳ тунă йĕркене йышăнасси.

52. 49 статйара „н“ па „ы“ кăтартнă пунксенҫи ĕҫсене Пĕтĕм Раҫҫейри Ĕҫ тăвакан Тĕп Комиттет

Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесĕне пуçтарма май килмесен çеç тума пултараť.

Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесĕне Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан. Тĕп Комиттет Респупликкăн ҫи кирлĕ пысăк ĕçĕсене çеç тăваççĕ. Сйес хаҫхи тĕп сакунне улăштарма та, тата çĕнĕрен хушма та пултараť. Сйесна Ĕç тăвакан Тĕп Комиттет Респупликкăн пĕтĕм шалти пысăк ĕçсемпе йут патшалăхсемпе хутшăнас ĕçсене тăваççĕ Раççей Респупликкин, тата унăн оплăçĕсен ҫиккисене кăтартса параť.

Кам вăрçа пуçлама, килешў тума пултараť? Пĕтĕм Респупликкăри ĕç халăхне суйласа йанă шанҫăклă çынисен Сйесĕ 1914-мĕш çулта Микула патшапа унăн тарçисем вăрçă пуçларĕç, çак вăрçă тĕтĕм ĕç халăхне пĕтерҫĕ, Канашсен 4-мĕш Сйесĕ килешў турĕ. Малалла та вăрçă пулас, килешў тăвас ĕç Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесĕн ĕçĕ пухмалла.

Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесĕн, йе Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комиттетăн халăх хуçайствин пĕр план йĕркине хатĕрлемелле, укçа килиине кайнине лайăх тĕрĕслесе пымалла, тата ытти ĕçем те тумалла.

Вырăнсенҫи Канаш ирĕкĕн орканисатсийĕ.

Канашсен Сйесĕсем çинҫен.

53. Канашсен Сйесĕне ак çапла тумалла:

а) Оплăç сйесĕсем хулари Канашсемпе уйесри

сĕессенҫен 25 пин ҫынтан 1 ҫын, хулара 5 пин суйлаканран ҫын шутласа суйланă ҫынсенҫен пуласҫĕ, анҫах оплăҫ сĕесĕсенҫе 500 ҫынтан ытла пулмалла мар; оплăҫ сĕесĕ, ун умĕн кĕпернĕсенҫи Канашсен сĕесĕсем пулсан, кĕпĕрне сĕесĕсем ҫав йĕркепех суйланă ҫынсенҫен пулаҫ.

у) Кĕпĕрнерисем (округсенҫисем) — хуласенҫи канашсемпе вулăссенҫи сĕессенҫен—10 пин ҫын пуҫне 1 тĕпутат, хуласенҫен — 2 пин суйлакансен пуҫне 1 тĕпутат шуҫĕпе, анҫах сĕесре пĕтĕм кĕпĕрнĕрен (округран) 300 тĕпутатран ытла пулмалла мар; йе кĕпĕрнери Канашсен сĕесĕ умĕн, уйесри Канашсен сĕесĕсем пулсан, сĕесĕ вулăссенҫи сĕессенҫе мар, уйесри сĕессенҫи ҫав шутпах суйламалла.

н) Уйессенҫисем (районсенҫисем) — йалти Канашсен 1 пин ҫын пуҫне пĕр тĕпутат шуҫĕпе суйланă ҫынсенҫен пуласҫĕ, анҫах, пĕтĕм уйесрен (районран) 300 тĕпутатран ытла пулмалла мар.

р) Вулăссенҫисем-вулăсри йалсен Канашĕсен 10 ҫулен пуҫне 1 тĕпутат шуҫĕпе суйланă ҫынсенҫен пуласҫĕ.

1-мĕш хушса калани: Хулара 10 пин ҫынран ытла пурăнмасть пулсан, уйĕс сĕесенҫе ун пек хуласенҫи суйланă ҫынсем пуласҫĕ. Йалсенҫе 1 пин

çынтан сахалтарах пулсан, уйесри сйесе йана суйлама ун пек йалсен Канашĕсем пĕр-пĕринне пĕрлешеççĕ.

2-мĕш хушса калани: Йалти канашсенҫе 10 шар ҫленрен кайа пулсан та, вулăсри сйесе пĕрер çын йараççĕ.

Вырăнсенҫи Канаш ирĕкне орканисатсилесси малтанах пит йывăр пулнă. Канашсене орканисатсилекен оркан пулман пирки уйрăм Канашсем хушшинҫе тавлашусем те ҫас ҫасах нулкаланă.

Тĕп саккун вырăнсенҫе Канаш ирĕкне мĕнле орканисатсилесе йарассине лайăх кăтартса парат. Мĕнле-ха еппин вырăнсенҫе, йалсенҫен пуçласа тĕп хуласене çитиҫҫенех, Канаш ирĕкне орканисатсилеççĕ? Йалсенҫен пуçлăпар. Поликарппăвкă йалĕнҫе мĕн пурĕ 1120 ҫун, вĕсенҫен 72 пĕҫĕк аҫа, çынна тара тытса ĕçлеттерекен 14 кулак, 3 лавкаç, ҫиркӳре ĕçлесе тăранакансем 9, ытти 1020 çын Канаш Республиккинҫе пурăнакан краштан тивĕçлĕхне илекенсем. Йулашкинҫен вара хăйсенҫен, 100 çын пуçне 1 çын йал канашне суйлаççĕ! Йĕрке шуҫĕпе çав йал Канашне 11 çын кĕреççĕ.

Вулăсра 15 йал пулсан, 15 йал Канашĕсем хăйсенҫен 10 çын пуçне 1 тĕпутат суйласа йарса вулăс сйесене пуçтарнаççĕ. Вулăс сйесĕ вулăс Канашне 10 çын суйласа хăварат

Йал Канашĕсем хăйсенҫен, йалта пурнакăн 1 пин ҫун

пуçне 1 тĕпутат хулари сĕесе суйласа йараççĕ, хулари сĕес суйласа йараççĕ, хулари сĕес Хула Канашне суйласа хăварать. Хула Канашĕ пĕтĕм уйесри ĕçе пăхса тăрать.

„У“ пунктăра кăтартнă нормă тăрăх, хуларипе вулăсри Канашсен претставительĕсенĕн кĕпĕрнери Сĕес пуçтарнать. Кĕпĕрнери Сĕес, уйесри, вулăсри сĕесем пекех, Кĕпĕрнери Ĕç тăвакан Комиттет суйласа хăварать. Çав Комиттет пĕтĕм кĕпĕрнери ĕçсене пăхса тăрать, кĕпĕрнери хуçайствăна унăн уйрăм пайĕсене лайăхлатма тăрăшать. Тĕпри тӳре-шара хушувĕсене ĕçе кӳртсе пырать.

Раççей çĕр-шывпа экономи пурнăçĕ тăрăх ак çак оплăçсене уйăрлать: Мускав промышленнăçĕ, Çур-çĕрти, Урал, тата ытти оплăçсем те. Оплăçе темиçе кĕперне кĕреççĕ. Çав кĕпĕрнесем экономи пурнăçĕ тăрăх пĕр пĕринпе çыхăнса тăраççĕ, сăмахран хуçайствă орканисатсилес, çĕр-шыври пуйанлăхпа усă курас тĕлĕшпе. Оплăçри пурнăçа йĕркелес тĕлĕшпе Оплăçри Сĕес пуçтарăнать. Оплăçри Сĕес пуçтарăнас умĕн Кĕпернесенĕи Снессем пуçтарăнсан, Оплăçри Çĕесе тӳреах Кĕпĕрнĕсенĕи Сĕессем телекатсем йараççĕ, йе „а“ пунктăра кăтартнă нормăпа уйессенĕи сĕессемпе, хула канашĕсем претставителсем йараççĕ.

54. Канашсен сĕесĕсене çав территоринĕи Канаш ирĕкĕн ĕç туса тăракан орканĕсем (ĕç тăвакан Комиттетсем), йе хăйсем пуçтарас тенипе, йе вырăнти Канашсем ыйтнипе пуçтараççĕ. Вырăнти Канашсем ыйтнипе пуçтарас пулсан, ыйтакан вырăнта

пурăнакан çынсем, пĕтĕм районри çынсен виççéмĕш пайĕнҫен (1/3) сахал пулмалла мар. Оплăç сйесĕ çулталăкра икĕ хутран сахал, кĕпĕрне, уйес сйесĕсем виçĕ уйăхра, пĕрререн кайа, вулăс сйесĕ уйăхра пĕрререн кайа пуçтармалла мар.

55. Канашсен сйесĕсем (оплăçри, кĕпĕрнери, уйесри, вулăсри) ĕç туса тăма Ĕç тăвакан Комиттет суйлаççĕ. Оплăçре, кĕпĕрнере—25 ҫленрен, уйесре—20 ҫленрен, вулăсра—10 ҫленрен ытла мар суйлаççĕ. Ĕç тăвакан Комиттетсем хăйсене суйланă Канаш Сйесĕсене хисеп парса тăраççĕ.

56. Канаш (оплăçри, кĕпĕрнери, уйесри. вулăсри) сйесĕсем хушнипе хăйсене тивĕçлĕ ĕçсем тĕлĕшĕнҫен хăйсен теритторинҫе ҫăн аслă ирĕк, сйессем хушшинҫе çав ирĕк Ĕç тăвакан Комиттет аллинҫе пулмалла.

Канашсен Сйесĕсене кĕпĕрнери, хулари, вулăсри Ĕç тăвакан Комитеттсем пуçтараççĕ, пĕр хулари Комиттет çеç Канашсен Сйесне пуçтарма пултараймасť. Районра (кĕпĕрнере, уйесре, вулăсра) пурнакан çынсен Канашĕсен виççĕмĕш пайĕ, йе кĕпĕрнере пурнакан 300 пин çынтан 100 пин çын ыйтсан Сйес пуçтарăнаť.

Оплăçри сйес çулталăкра иккĕрен, кĕпĕрнесемпе уйессенҫе виçĕ уйăхран пĕрререн кайа мар, вулăсра-кашни уйăхра пуçтарăнаççĕ. Çапла пуçтарăнни вырăнти пурнăçăн ҫи

кирлĕ ĕçĕсене тума, Ĕç тăвакан Комиттетсене çĕнĕрен суйлама пулăшать.

Ĕç тăвакан Комиттетсене пĕр хула Канашĕсем çеç мар, кĕпĕрнери, уйĕсри, вулăсри Сйессĕм те вырăнти пурнăçа тытса тăма Ĕç тăвакан Комиттетсем суйлаççĕ. Çавăн пек Ĕç тăвакан Комиттетсем суйлаççĕ. Çавăн пек ĕç тăвакан Комиттет 55-мĕш паракрăха шутпа суйланăскер, тепĕр сйес пулиӳен пĕтĕм вырăнти пурнăçа тытса тăрать, авӳах пур ĕçсемшĕн те хăйсене суйлакан Сйесе хисеп парать.

Кĕпĕрнери Сйес суйлама Ĕç тăвакан Комиттетра 25 çынтан ытла ĕçлемелле мар; уйĕсри Ĕç тăвакан Комиттетра 20 çынтан ытла ĕçлемелле мар, вулăсриӳе—10 çынтан ытла ĕçлемелле мар. Комиттетра сахал çын ĕçлени ĕçе наӳарлатмасть, пушшех лайăхлатать, вĕсем нумайăн сăмахлакаласа ларас вырăнне ӳасах ĕçе туса тăраççĕ.

Тĕпутатсен Канашĕсĕм çинӳен.

57. Тĕпутатсен Канашĕсем ак çапла пулаççĕ.

а) Хуласенӳе-пурăнакан 1000 çын пуçне пĕр тĕпутат шутĕпе пулаççĕ, анӳах хула Канашĕнӳе 50 ӳленрен сахал пулмалла мар, 1000 ӳленрен ытла пулмалла мар.

у) Йалсенӳе (саласенӳе, 10.000 çынтан сахалтарах хуласенӳе, аулсенӳе, хутăрсенӳе)

100 çын пуçне 1 тĕпутат, анăах кашни йалтан 3 тĕпутатран кайа, 50 тĕпутатран ытла нулмалла мар. Тĕпутатсен полномоҫĕнийĕ 3 уйăха пыраҫ.

Хушса калани: Йалсенҫе май килмелле пек пулсан, халăха тытса тăмалли ĕçсене пур халăх пухăвĕнҫе пулмалла.

58. Тĕпутатсен Канашĕ кунсерĕн пулакан ĕçсене туса тăма Ĕç тăвакан Комиттет суйлаҫ. Ĕç тăвакан Комиттетра йалсенҫе 5 çынтан ытла пулмалла мар; хуласенҫи Канашăн 50 ҫленĕ пуçне 1 çын суйламалла, анăах суйланисем 3 çынтан кайа, 15 çынтан ытла пулмалла мар. (Питĕрпе Мускавра 40-шер çынтан ытла мар). Ĕç тăвакан Комиттет хăйне суйланă Канаша пур хисепе параҫ.

59. Тĕпутатсен Канашне Ĕç тăвакан Комиттет йе хăй хыççăн, йе Канаш ҫленĕсенҫен çурри ыйтсассан пуçтараҫ. Канаш хулара ернере хутран кайа, йалсенҫе 2 хутран кайа пуçтарăнмалла мар.

60. Хăйсене тивĕçлĕ ĕçсем тĕлĕшĕнҫен, Канаш аллинҫе, йе 57-мĕш § (хушса калани) кăтартнă вырăнсенҫе халăх пухăви хăйсен территорринҫе ҫăн пысăк ирĕк.

Йалсемпе хулари тĕпутатсен Канашĕсем хăйсен çĕршывĕнҫе ҫăн асли ирĕк пулаççĕ. Йалсемпе хула Канашĕсене хăйсен çĕршывĕнҫи ĕç халăхĕ суйлаҫ. Хуласенҫе 1000 çын

пуҫне 1 тĕпутат, йалсенҫе 100 ҫын пуҫне 1 тĕпутат, йалсенҫе 100 ҫын пуҫне 1 тĕпутат суйлаççĕ. Ҫак нормăна Канашсене суйлама кăтартнă. Хуласенҫе хăш ӳхне йалтинҫен те пумай, хăш ӳхне сахал халăх пурăнать, ҫавăнпа нормăна вăтам шута илсе тунă.

Хулари Канашра 50 тĕпутатран кайа, 1000 тĕпутатран мала; йалсенҫен 3 ҫынтан кайа, 50 ҫынтан мала пулмалла мар, анҫах саккун пĕлĕх йалсенҫе те пухсем туса ĕҫсем тума ирĕк параҫ.

58-мĕш параҫраха кăтартнă норма тăрăх тĕпутатсен Канашĕсем хăйсен хушшинҫен Ĕҫ тăвакан Комитетсем суйлаççĕ. Ҫав Комитетсем хăйсене суйлакан Канаш умĕнҫе хисеп тераççĕ.

Вырăнсенҫе Канаш ирĕкне туса тăракан оркăнсен ĕҫĕсем.

61. Оплăҫри, кĕпĕрнери, уйăсри, вулăсри, Канаш ирĕкне туса тăракан оркансемпе тĕпутатсен Канашĕсен ак ҫак ĕҫсене тумалла.

а) Хăй йышши аслăрах Канаш орканĕсем хушшине ĕҫе кӳртмелле.

у) Вăй ҫитиĕ таран хăйсен территорийне культурине пурлăх тĕлĕшĕнҫен ӳстерме тăрăшмалла.

и) Хăйсен теритторинъе пур вырăнти ĕçсене тумалла.

р) Хăйсен теритторинъе пур Канаш ĕçне пĕрлештерсе тăмалла.

62. Канашсен Сйесĕсемпе вĕсен Ĕç тăвакан Комиттеъĕсем вырăнти Канашсен ĕçĕсене пăхса тӳрлэтсе тăма пултараççĕ (калăпăр: оплăçри Канашсен сйесĕ, йе Ĕç тăвакан Комиттеъĕ çав Оплăçри мĕн пур Канашсен ĕçĕсене, кĕпĕрнери Канашсен сйесĕ йе Ĕç тăвакан Комиттеъĕ çав кĕпĕрнери мĕн пур Канашсене ĕçĕсене, уйесри сйесене кĕмесĕр тăракан хула Канашĕсен ĕçĕсемсĕр пуçне, тата ытти те çавăн пекех). Кунсĕр пуçне оплăç, тата кĕнĕрне сйесĕсемпе вĕсем суйласа хăварнă Ĕç тăвакан Комиттетсем хăйсен районĕнъи Канашсем йышăннă ĕçсене улăштарма пултараççĕ. Пысăк ĕçсене улăштарни çинъен Канашсен Тĕпри ирĕкне пĕлтермелле.

63. Канаш ирĕкне туса тăракан оркăнсем çак кăтартнă ĕçсене тума Канашсем çумне (хулара, йалта), тата Ĕç тăвакан Комиттетсем çумне (оплăç, кĕпернĕ, уйес, вулăс) ĕçсем тĕллĕн Пайсем уçаççĕ; Пайсем пуçĕнъе саветуйушъийсем пулса тăраççĕ.

Пуринъен ытла вырансенъи Канаш ирĕкĕн мĕн тумалла? Тĕпри ирĕкĕн хушăвĕсене пурне те тĕрĕс, йĕркеллĕ ĕçе кӳртсе пымалла. Çак тĕлĕшпе вырăнсенъи Канаш ирĕкĕн

малтанах нумай йурăхсăр ĕçсем пулнă, ĕçĕ вăл турă мĕнле хушать, тенĕ пек туса тăнă, çавăнпа та унăн Тĕпри ирĕкпе хирĕçекен ĕçсем те ăылай пулнă. Çак усала вырăнсенъи ирĕк Тĕпри ирĕкрен тухакан хушусене тĕрĕс ĕçе кăртсе пырсан çеç пĕтерме пулать.

Кунсăр пуçне вырăнти ирĕкĕн тата пысăк тумалли ĕçсем пур, хуçайствă хăпартасси, халăха çутта кăларасси, тата ыттисем те. Вăрçă хушшинъе-хыллăх хуçайстви пĕтĕмпех ишĕлтĕ; кĕперсем, çулсем-пурте ваятăк. Шкулсене, пуăнитсăсене, прийутсене-пурне те йусамалла, синлемелле.

Çĕнĕ йĕркепе хуçайства хăпартасси пиртĕ хĕн, мĕншĕн тесен пĕтĕм киввине вăтса çĕнĕрен, сотсиалисăмла хуçайствă тумалла.

Хулари уйрăм çынсен хуçайстви пĕтĕмпех Канашсен аллине куçать. Промышленнăç, суту-илу тăвасси, çутта кăларасси пĕтĕмпех Канашсен ĕçĕ пулмалла. Малсенъе те ĕçсем сахалах мар. Пĕтĕм çĕр хресъенсен аллине лекрĕ, малтан ăна хресъенсене тавлаштарса памалла, çĕнĕ майсемпе ĕçлеттермелле-пурте вĕсем çăмăл ĕçех мар.

Тата комунă хуçайствисене орканисатсилесси, ъухăнсене пĕрлештересси-пурте пуç çинъе тăракан ĕçсем, вĕсене вырăнти Канаш ирĕкĕ çеç пурнăçа кăртсе пама пултарать. Асăрах Канаш орканĕсен Тĕпри ирĕк хушăвĕсене вырăнсенъи Канашсем мĕнле ĕçе кăртсе пыннине астуса тăмалла. Çапла уйăсри Ĕç тăвакан Киминттетăн хăй уйăсĕнъи вулăссемпе йал канашĕсен ĕçĕсене тĕрĕслемелле.

Оплаҫсемпе кӗпӗрнери Канаш орканӗсем хӑйсен ҫӗр шывӗнҫи Канашсен Тӗпри ирӗкпе хирӗҫекен ӗҫӗсене улӑштарма та пултараҫҫӗ. Ҫавӑн пек ӗҫсем те сахалах пулман. Вырӑнти ирӗк хӑш ҫухпе хӑй пӗлнӗ пек Тӗпри ирӗкӗн хушувӗсене тепӗр майлӑ туса пыраҫ. Ун пек Канашсен ӗҫӗсене хӑвӑртрах пӗтерме тӑрӑшмалла.

Канаша кам суйлама, кам суйланма тивӗҫли ҫинҫен.

64. Раҫҫей Хветератсийӗн Сотсиалисӑмпа Канаш Республикӗнҫи суйлас кунҫҫи 18 ҫул тулнӑ ак ҫак краштансем-арҫынни те, хӗр-арӑмӗ те-Канашсене суйлама пултараҫҫӗ.

а) Пур ҫӗнӗ йӑнала тӑвас ӗҫпе, тата халӑха усӑллӑ ӗҫпе тӑранса пурнакансем, тата ҫав ӗҫе тума пулӑшса килти ӗҫе тӑвакансем: промышленнӑҫре, суту-илӳре, ҫӗр ӗҫӗнҫе, т. ытти ҫӗрте те ӗҫлекенсемне слушит тӑваканӗсем, тупӑш курма ҫын тара тытса ӗҫлеттермен хресҫенсемне ҫӗр ӗҫлекен касаксем.

у) Канаш тинӗ ҫӗрӗнҫипе хӗтри салтаксем.

н) Мӗнпӗн те пулин ӗҫ халне ҫухатнӑ 64-мӗш

статйара „а“ па „у“ пунксенҫе кăтартнă краштансем.

1-мĕш хушса калани: Вырăнти Канашсем, çак статйара хунă çула Тĕпри ирĕк йышăнсан, ҫакарма пултараççĕ.

2-мĕш хушса калани: Раççей краштанĕсен шутне кĕмен 20-мĕш статйара (иккĕмĕш уйрăм, пиллĕкĕмĕш сыпăк) кăтартнă çынсем суйлама та, суйланма та пултараççĕ.

Ĕлĕк патшалăх Тумĕне 25 çула çитнĕ çынсем çеç тĕпутатсем суйлама пултарнă. Патша тарçисем çамрăксенҫен ҫĕтренĕ,—çамрăксем ҫасах ҫуралăхпа пусмăрлăх тĕнҫине хирĕç кайма пултараççĕ. Хĕр-арăмсенҫен пĕри те суйлама пултарайман, ĕçлекенсемпе хресҫенсем валҫăи суйлама норма пулман.

Керенски ҫухне те суйлас ĕç вăрттăн пулнă Уҫретиттĕлни пухуне конвертсем ăшне списăксем ҫиксе тӳррех çав пухăва йанă.

Уҫретитĕлни пуху лайăх ĕçсем тумалла пек ҫĕ, анҫах çав пухура ĕç халăхĕн тăшманĕсем, хăҫхи контр-революционерсем пулҫĕç.

Çак ĕç суйлама ирĕк паман пирки пулҫĕ, мул хуçисемпе меҫшевиксем, ессерсем хăйсен ĕçне турĕç; ĕç халăхĕ хăйĕн ҫăн шанҫăкла çыннисене йарасса хирĕç вĕрентрĕç, суйланă ҫух пуйансемпе, харам пырсем ҫухăнесемпех пĕрлех пулнă.

Канаш ирĕкĕнҫе Сйессене çын суйласа йама çынна тара тытса ĕçлеттермен, хăй ĕçленипе тăранса пурнакан краштансем пурте пултараççĕ. Пур хресҫенсем, пур ҫухăнсем, хăй ĕçленипе тăранса пурнакан çынсем Канаш Раççейĕнҫе суйлама та, суйланма та пултараççĕ.

Кил-картисенҫе кăшăртатса çӳрекен хĕр-арăм, 18 çула çитнĕ аҫапа хĕр,-пурте Канашсене суйлама пултараççĕ.

Хресҫенсемпе ĕçлекенсемсĕр пуçне, суйлас тивĕçе салтаксемпе морексем те илеççĕ.

Мулăн саккунĕ салтаксене суйлама ирĕк паман.

Украйнăри ирĕк мул аллине куçсанах, салтаксенҫен суйлас тивĕçе туртса илҫĕç.

Канаш Республиккинҫе пур ĕç çыннисем те Канашсене суйлама пултараççĕ.

Вăй халне çухатнă аманнă ĕçлекенсем, çын ĕçленипе тăранса пурăнмаççĕ пулсан та Канашсемпе Сйессене çын суйласа йама пултараççĕ. Вĕсем те ытти краштансĕмпе пĕр танах.

65. Малтан кăтартнă çынсем шутне кĕреççĕ пулсан та, суйлама, суйланма ак çак çынсем пултараймаççĕ:

а) Тупăш тăвасшăн çынсене тара тытса ĕçлеттерекенсем.

у) Ĕçлемесĕр тупнă укçапа пурнакансем: укçаран проҫҫăн илсе пурнакансем, тупăш илсе пурна-

кансем, мул тупăшĕпе пурнакансем, тата çавăн пекки-сем ыттисем те.

н) Суту-илӳ тăвакансем, суту-илӳпе комертсиннĕн йевĕрĕсем.

р) Манăхсем, тĕрлĕ тĕнĕн пуп таврашсем.

с) Ĕлĕкхи политсиннĕе, уйрăм шантар корпусĕннĕе, охранă пайĕсенĕе ĕçлекенсем, йе унта акент пулнисем, Раççейри ĕлĕкхи патша йăхĕнĕен тухнă çынсем.

л) Саккун шуĕĕпе ухмаха йернĕ çынсем, тата кеккун аллинĕе тăракан çынсем.

ш) Мулшăн пулнă, тата усал йата кĕмелле ĕçсемшĕн саккун тăрăх айăпланнă çынсем, саккун, йе сут прикăвăрĕ кăтартнă вăхăтра суйлама пултараймаççĕ.

Кам суйлама, тата суйланма та пултараймасть?

Çын ĕçленипе, çынна тара тытса ĕçлеттерекенсем. Хапрăксемпе ĕçлекенсем тытакан хуçа; тара тытса çĕр-ĕçне ĕçлеттерекен кулак,—çак харам пырсем пурте Сотсиалисăмлă Республиккăра Сйессемпе Канашсене суйланма пултараймаççĕ. Пурте вĕсем тупăш тупса пурнаççĕ: хуса ĕçлекепе куляе 15 тенкĕ тӳлет, ĕçлекен тунă тавара 25 тенке сутать; йалти кулак тырă-пулă акса пуçтарттарса хуĕĕ, çав çын тарĕпе пулнă тырра вăл çпеккуĕантсене тем пек хаклă хака суртĕ. Ун пек харам пырсене саккун суйлас тивĕçлĕхе памасть.

Парламĕнт, тумă, уҫретитĕлни пуху пур çĕртри мул патшалăхĕнҫе пуйансен ирĕкне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекенсемпе хресҫенсене суйлас тивĕçлĕхе памаççĕ пулсан, Канаш Республикинҫе ун вырăнне ĕç халăхĕн ирĕкне сыхлас тĕлĕшпе улпут хуçасене, тата тĕрлĕрен харам пырсене Канашсемпе Сйессене суйлама ирĕк памаççĕ Лавкаçемпе çпекулянтсене, усламăçсене (улпутсене) суйлама ирĕк памаççĕ. Пурте вĕсем ĕç халăхĕн ҫи хайар тăшманĕсем, контр-революцĭонерсем.

Халăха улталасса мула сыхлакан пупсемпе манахсем те суйланма пултараймаççĕ. Ҫиркӳ патшалăхран уйăрăлнă, çавăнпа пупсемпе манахсен патшалăх ĕçне хутшăнмалла мар. Вĕсен хăйсен, тĕттĕм халăха улталас ĕçĕ пур.

Ĕлĕк политсире, шантарта, охранăра тăнă çынсемпе тĕрлĕрен патша тарçисем Канаша суйланма пултараймаççĕ, вĕсене хытă астуса тăмалла, контр-революцĭонер ĕçне хутшăннине курсанах халăх опҫествинҫен уйăрмалла.

Вăрсем, айăплă çынсем Канаша суйланма пултараймаççĕ.

Суйлас ĕç çинҫен.

66. Суйлас ĕç ĕлĕкхи йăласем тăрăх, вырăнти Канашсем кăтартнă кунсенҫе пулмалла.

67. Суйланă çĕрте суйлакан комисси пулмалла, тата вырăнти Канаш йанă çын пулмалла.

68. Канаш йанă çыннăн суйланă çĕрте нийепле

те иулма май килмесен, ун вырăнне суйлакан комиссин пуçлăхĕ пулать, вăл та пулмасан, суйлакан пухăн пуçлăхĕ пулать.

69. Мĕнле суйлани çинъен, кама суйлани çинъен суйлакан комиссин ӗленĕсемпе Канаш йанă çын ал пусса протоккол çырмалла.

70. Суйлас йĕркене, тата ĕçлекенсен прохвеççине ытти органисатсийĕсен унта мĕн мĕн тума пултарнине, Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комитетăн инструктсийĕ тăрăх вырăнти Канаш тĕпĕйĕрĕпе кăтартса параť.

Суйлани хăçан пуласси, мĕнле йĕркепе суйланинъен килет, пуринъен ытла пуш вăхăтсенъе, праçнăк кунĕсенъе суйлама авантарах.

Суйланă ӗухне йĕркерен тухса суйламалла мар, йунăшсем тумалла мар, йунăша кура суйланине хирĕçекенсем тупăнма пултараççĕ. Çавăнпа суйланă çĕрте вырăнти Канаш пуçлăхĕ, йе суйлакан комисси пуçлăхĕ пулмалла, вĕсенъен пĕри те пулмасан, суйлакан пухăн пуçлăхĕ пулмалла. Хуť те хăçан та суйланă çĕрте пĕр асларах ĕçре тăракан çынсем пулмалла. Вĕсем мĕнле суйлани, кама суйлани çинъен протоккол çыраççĕ.

Суйлас ӗҫе тӗрӗслессипе улăштарасси, тӗпутатсене кайалла ҫӗнсе илесси ҫинҫен.

71. Суйлани ҫинҫен пӗтӗм маттериала-суйлас вырăнти Канаш аллине памалла.

72. Канаш-суйланине тӗрӗслеме, мантат комиҫсийӗ тăваҫ.

73. Мантат комиҫсийӗ хăй тӗрӗслени ҫинҫен Канаша каласа параҫ.

74. Тавлашуллă кантитатсене йышăнасси Канашран килет.

75. Кантитатсенҫен хăшне те пулин йышăнмасан, Канаш ҫӗнӗрен суйламалла тăваҫ.

76. Суйлассине пӗтӗмпех тӗрӗс суйламан пулсан, ăна улăштарса тепӗр хут суйласси Канаш ирӗкне туса тăракан ҫӳлӗрех оркантан килет.

77. Канашсене суйланă ӗҫӗн кассатсийӗн йулашки инстантси—Пӗтӗм Раҫҫейри Ӗҫ тăвакан Тӗп Комиттет.

78. Канаша тӗпутат суйласа йанă ҫынсем ăна кирек-хăҫан та унтан ҫӗнсе илсе, ҫан кăтартса пани тăрăх, ҫӗнӗрен суйлама пултараҫҫӗ.

Суйлани ҫинҫен пӗтӗм ӗҫе вырăнти Канаш аллине параҫҫӗ, Канаш ҫав ӗҫе пăхса тухса тӗрӗслет, вăл пӗтӗм тавлашуллă ӗҫсене тăваҫ. Хăй тума пултарайман ӗҫе аслăрах ор-

кăн аллине параŗ. Аслă оркансем те пултараймасан, çав ĕç Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комитета кайаŗ.

Суйлакансем хăйсен Каната йанă тĕпутата калла ӳĕнсе илсе, тепĕр хут суйлама пултараççĕ.

Мулăн парламĕнтĕнӳе никам та тĕпутата калла ӳĕнсе илме пултарайман, Хуŗ те мĕнле пулсан та тĕпутат перламентрах йулнă. Кун пек Раççейри Тумара та, Уӳретитĕлӳни пухура та çаплах пулнă. Çапла туни тĕрĕс-ши? Çук. Уӳретитĕлӳни пухава суйланинех илер-ха. Керенскин ӳейе политиккипе сылтăм ессерсем хăйсене майлă йулташсене сулахай ессерсен парттинӳен те нумай тупнă, йалсенӳе пуринӳен ытла сылтăммисем майлă нумай пулнă. Хуласенӳи ĕçлекенсем, утă уйăхĕнче йепле комуниссене хĕстернине кура, хăйсен ӳăн претставитĕлĕсене сахал суйланă. Çапах та ун ӳухне ĕç пуйансем майлă тухнă.

Анӳах Уӳретитĕлӳни пухăва суйлани пĕр уйăх та иртмерĕ, пĕтĕм хулари ĕçлекенсемпе йалти хресӳенсем хăйсене улталаннине сисрĕç, хăйсен ташманĕсене курӳĕç. Хăйсем улталаннине вĕсем йупа уйăхĕнӳи революцине, Капашсен 2-мĕш Сйесне Комуниссене нумайтарах суйланине лайăх кăтартрĕç. Çавăн пек кутăн-пуçăн тумалли ĕçсем ан пулӳăр тесе, Сотсиалисăмла Республикăн саккунĕ суйлакансене хăйсен тĕпутатне калла ӳĕнсе илме ирĕк параŗ.

Пӳтиет тивӗҫи ҫинҫен.

79. Раҫҫей Хветератсийӗн Сотсиалисӑмпа Канаш Республикки хвинанс политтики ӗҫлекен халӑх тикӑтурин ҫак улшӑну вӑхӑтӗнҫе пуршуаҫийе експроприатси тӑвассине пулӑшать. Республикӑри краштансене, мул тӑвасипе мул валеҫесси тӗлӗшӗнҫен, пурне те танлаштарас ӗҫе хатӗрлеме пулӑшать. Ҫак йапаласене тума, уйрӑм ҫыннӑн пуйанлӑх тивӗҫне пӗтересси умӗнҫе ҫарӑнса тӑмасӑр, Канаш ирӗкне туса тӑракан оркӑнсен аллине, Канаш Республикки вырӑнтипе пӗтӗм патшалӑхри нушасене ҫӑтма вӑй парать.

Патшана пуйансен хысни ҫухӑнсенҫен илнӗ куланайран, халӑха тӗттӗмлетме тунӑ хупах укҫисенҫен пуҫтарӑннӑ. Йалти ҫухӑнран куланайшӑн йулашки ӗнине, хулари ӗҫлекентен те тем ҫул укҫа илнӗ.

Хресҫенсенҫен куҫа курӑнакан куланайшӑн темиҫе мӗлйун укҫа илнӗ, тата ыттисемшӗн татах нумайтарах илнӗ. Патшалӑх хысни ӗлӗк ҫухӑнран тапак, сахӑр, шӑрпӑк суттарса илнӗ укҫасенҫен пуҫтарӑннӑ, хуҫасем ӗҫ халӑхне ҫаратнӑ укҫинҫен тулнӑ. Хресҫентен куланай, ӗҫлекентен укса илни сахал-ха вӗсенҫенех тата тӗрлӗрен пӑшал таврашсем, тупӑсем, хуҫасем валҫи ҫапла ҫуртсем тума темӗн ҫул укҫа сӗвнӗ. Ҫухӑнсене ҫаратнӑ, пуйан хуҫасене пуйтарнӑ, вӗсен

пурнăçне лайăхлатма тăрăшнă. Мул патшалăхĕсен хвинанс политикки-пуйансен ӳухăнсене çаратакан политики.

Сотсиалисăмлă Республикăра ун пек политикĕ кирлĕ мар, пур краштансенӳен те куланай пĕр пек пуçтармалла, пĕр пек валеçсе памалла. Патша ӳухне пуйансем сахалах мар укçа хатĕрлерĕç, вăрçă вăхăтĕнӳе те вĕсем касăсене ӳылай тултарӳĕç. Халĕ, Республикăн пурлăхĕ йухăнса çитнĕ вăхăтра, Ĕç халăхĕн хыснине пуйанлатмалла çак тĕлĕшпе пуйса йулнă пуйансен касăсене пăртак ăшăклатмалла. Республикăна халĕ хуçайствăна хăпартма укçа нумай кирлĕ. Камран укçа пуçтармалла? Каллех ĕлĕкхи хуçасем пек ĕç халăхне çаратса-и? Халăх хуçайстви патша вăрçи пирки ишĕлӳĕ. Патша вăрçи кама кирлĕ пулнă? Пуйан хуçасене тупăш тупма. Ĕç халăхне вĕлерсе, ăна вĕлермелли йапаласем хатĕрлесе кам пуйрĕ? Пуйан хуçасемпе лавкаçсем. Апла пулсан, халăх хуçайствине хăпартма вĕсеннех касăсене тултарнă укçисене кăларса памалла. Памасассăн, ирĕксĕрех илмелле. Саккун вырăнти Канаш ирĕкне пуйансен ытлашши укçине илме ирĕк параť. Урăхла пулма та пултараймасť. Пуйса кайнă пуйан Раççейре пурăннине йут патшалăхри пурăннă пек шутлаť, çавăнпа вăл укçана ирĕккĕнех ĕç халăхне тыттарас çук. Вăл пуйма майлă вырăна анӳах хăй çĕр-шыв вырăнне хураť. Çавăнпа пуйанран укçа илме майне пĕлес пулаť. Унтан хăйĕн çурт-йĕрне курса куланай илес пулаť. Ку сахал-ха. Унăнне тата вăрçă хушшинӳе, патша вăхăтĕнӳе пуйса йулнă укçа хутаççине пăртак пĕӳĕклетес

пулаҭ. Çавӑнпа ку ӗçе пурте ӗрлешсе, Тӗпри ирӗке пӗлтерсе тӑрса тумалла.

80. Раççей Хвӗтератсийӗн Сотсиалисӑмпа Канаш Республиккин патшалӑхри тупӑшсемпе расхуҫӗсем пӗтӗм патшалӑх пӳтшетӗнҫе пӗрлешсе тӑраççӗ.

81. Пӗтӗм Раççейри Канашсен Сйесӗ, йе Пӗтӗм Раççейри Ӗç тӑвакан Тӗп Комиттет, мӗнле тупӑшсемпе куланайсем пӗтӗм патшалӑх пӳтшетне кӗмеллине, хӑш вырӑнти Канашсен аллине йулмаллине, тата куланай мӗн ҫухлӗ хумаллине кӑтартса параççӗ.

82. Канашсем куланай вырӑнти расхутсене витмелӗх çеç хураççӗ. Пӗтӗм патшалӑха кирлӗ расхутсене Пӗтӗм патшалӑх хысни тӳсет.

83. Патшалӑх хыснинҫен, патшалӑхри тупӑшпа расхут хуҫӗ çинҫе кретит памасӑр, йе Тӗпри ирӗк уйрӑм постановлени тумасӑр, пӗр расхут та тумалла мар.

Йупа уйӑхӗнҫи революцутси пулиҫҫен патшалӑхри тупӑш ӗçӗ кам аллинҫе пулнӑ? Пуйансен-хуçасен, улпутсен, пупсен тата тӗрлӗрен харам пырсен аллинҫе. Çавӑнпа та патша вӑхӑтӗнҫе пӗтӗм ҫухӑнсенҫен, ӗç халӑхӗнҫен, çеç куланай пуçтарнӑ. Пӗтӗм патшалӑх хысни йалпа хулари ӗçлекенсене çаратнипе пулнӑ.

Йупа уйӑхӗнҫи революцутси хыççӑн куланайсемпе расхут-

сен ĕçĕ Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесĕпе Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комиттет аллине куçрĕ. Çак оркăнсем пĕтĕм хысна ĕçне туса тăраççĕ. Патшалăх хыснисĕр пĕр патшалăх та пурнаймасť, çавăнпа халĕ Канаш Раççейĕнђе кам нумайрах укçа тытаť, çавсенђен куланайне те ытларах илеççĕ. Пуйансемпе ђухăнсем танлашса çитсен, куланайа пуринђен те пĕр пек илĕç, ун ђухне патшалăх хысни пĕтĕм патшалăхри хуçайствă тупăшĕнђен пуçтаранаť.

Револђутси пулиђђен пĕтĕм халăх хуçайстви уйрăм пуйансен аллинђе пулнă, вĕсем пĕтĕм хапрăк-савăтçенђен, çĕртен, çĕр айĕнђи пуйаилăхран тупăш тупса пурăнă. Патшалăх ун ђухне, пуринђен ытла çар, хлот, ђинавниксем ĕç халăхĕн укçипе тытăнса тăнă. Халĕ пĕтĕм патшалăхри пурлăх патшалăх аллине куçрĕ, патшалăх хысни, ĕçлекенсене тўленĕ, ђĕр-таварсем илнĕ укçасăр пуçне пĕтĕм пурлăх тупăшĕнђен пуçтарнаť. Çавăнпа ĕлĕкхи пек, ĕç халăхне нумай куланай хурса асаплантарасси çук.

Кашни тупăшах, вырăнне мĕнне пăхмасăр патшалăх хыснине кĕмелле, анђах хăш тупăшсен пайне вырăнти Канаш аллине те хăварма пулаť. Мĕнле тупăш Пĕтĕм патшалăхри хыснана каймаллине, мĕнли вырăнти Канаша йулмаллине Пĕтĕм Раççейри Канашсен Сйесĕпе Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комиттет пĕлсе тăраť, çав оркансемех хăш вырăна (оплăçе) мĕн ђухлĕ куланай хумаллине кăтартса тăраççĕ.

Вырăнти ирĕк хăй çĕр шывĕнђи халăх нушине питĕр-

мелĕх çеç куланай хураĕ. Пур вырăнсенĵи патшалăха кирлĕ ĕçсемшĕн пĕтернĕ расхутсене патшалăх хысни ĵăтаĕ. Хăш ĵухне çеç çак шутран Тĕпри ирĕк постановлени йышăнсан, ĵакмалла пулаĕ.

84. Пĕтĕм патшалăх уссишĕн расхут тума, вырăнти Канашсене расхута мĕнле ĕçне тумалла, çав ĕçе пăхса тăракан Халăх Комиссариаĵĕ патшалăх хысниĵен кирлĕ ĵухлĕ кретит параĕ.

85. Патшалăх хысниĵен Канашсене панă пур кретитсене те, вырăнсенĵи расхутсем ваӳӳи йышăннă çметтăсем тăрăх панă кретитсене те, вĕсене çметтăра пайласа (паракрăхра, статйара) кăтартса хунă тăрăх кăтартнă ĕçшĕн çеç пĕтерме йураĕ, Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комиттет, йе Халăх Комиссарĕсен Канашĕ уйрăм постановлени туса йышăнмасăр урăх çĕре тытăлама йурамасть.

86. Вырăнти Канашсем вырăнти тунăшсемпе расхутсен çметтине çур çул ваӳӳи те, нĕр çул ваӳӳи те туса хураççĕ. Йалти, вулăсри Канашсен уйесри Сйесĕне кĕрекен хулари Канашсен çметтисене, уйесри Канаш ирĕкне туса тăракан оркансен çметтисене хăйсен кĕпĕрне, йе оплаç сйесĕсем, йе вĕсен Ĕç тăвакан Комиттеĵĕсем йышăнаççĕ; хулари, кĕпĕрнери, оплăçри Канаш, ирĕкĕн орканĕсен çмет-

тисене Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комиттетпа Халăх Комиссарĕсен Канашĕ йышăнаççĕ.

87. Çметтăра кăтартман расхутсене тума, тата çметтăра кăтартнă укçа çитмесен Канашсем, мĕнле ĕç тума укçа кирлĕ, çав ĕçе пăхса тăракан Халăх Комиссариатĕнҫен кретит тата хушса ыйтаççĕ.

88. Вырăнти расхутсене тума вырăнти вăй çитмесен, кĕтмелле мар вырăнти расхутсене тума вырăнти Канашсен патшалăх хысвинҫен пулăшу илесси, Пĕтĕм Раççейри Ĕç тăвакан Тĕп Комиттетпа Халăх Комиссарĕсен Канашĕсенҫен ки́лет.

Вырăнти Канашсен ыйтувĕсене ĕçе кĕртес тĕлĕшпе, Йупа уйăхĕнҫи революутси хыççăнах ҫылай ĕç кăлтăкĕсем пулкаларĕç. Укçаран аптракан вырăнти Канаш тӳррех Патшалăх панккинҫен, йе халăх Комиссарĕсен Канашĕнҫен çавăн ҫухлĕ укçа йама ыйтатҫĕç. Вĕсен ыйтса йанă хуҫĕсене никам та пăхса тĕрĕслемен. Укçа кирлĕ, Тĕпри ирĕкĕн ăна памаллах Респупликкăра ун пек йĕрке пулмалла мар. Вара кашни вырăнтан пыракан йулташа: укçа илес пулсан, çметтă хатĕрлемелле, мĕн тума укçа кирлине кăтартмалла, тесе йамалла пулнă.

Анҫах вырăнти ирĕке лайăх орканисатсиленмен майĕпе ун пек çметтăсене тума йăвăр пулнă. Халĕ пур çĕрте те тенĕ пекех хвинанс уйрăмĕсем пур, вĕсем вырăнти тупăшсен, расхутсен ĕçне йĕркелесе тăраççĕ. Çавăнпа ĕç ĕлĕкхинҫен ҫилай çăмăлланҫĕ. Халĕ Халăх Комиссариаҫĕсем вырăнти Канаш-

сене кирлĕ ҫухлĕ кретиг йарса тăраççĕ Вырăнти Канашсен патшалăх панккăнҫен илнĕ укçана расхутсене питĕрмелĕх çеç салатмалла. Кашни вырăнти Канаш вырăнти тупăшпа расхутсен çметтăне хатĕрлет. Йал, вулăс, уйесри хуласенҫи Канашсен çметтисене кĕпĕрнери, Оплăçри Канашсен Сйесĕсем йышăнаççĕ. Аслăрах Канаш орканисатсийĕсем çметтисене Тĕпри ирĕк йышăнаť.

Çметтăна кӳртмен расхутсене Тĕпри ирĕк хушсан çеç çметтăри укçапа питĕрмелле.

Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респупликкин керпĕпе йалавĕ çинҫен.

89. Хĕрлĕ çинҫе хĕвел пайăрккисен ăшăнҫе пуçахсенҫен тунă кăшăлпа çавăрса илнĕ хĕреслĕ-хĕрес авăрисене айалалла туса ӳкернĕ ылтăн çурлапа млатук, çийелтен çыру: а) Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респупликки (Российская Социалистическая Федеративная Советская Республика), тата у) Пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем, пĕрлешĕр! (Пролетарии всех стран, соединяйтесь!)—Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респупликкин керпĕ пулаť.

90. Суллахай кӗтессинҫе, йӑвӑҫ сумӗпҫе çӳлте ылтӑн сас паллисем: Р. Х. С. К. Р. (Р. С. Ф. С. Р.) йе: Раççей Хветератсийӗн Сотсиалисӑмпа Канаш Республикки (Российская Социалистическая Федеративная Советская Республика), тесе çырнӑ хӗрлӗ пир—суту-илӳ, тинӗс, çар йалавӗ пулать.

Кашнӑ патшалӑхӑн хӑйӗн керпӗпе йалавӗ пур. Раççейре патша вӑхӑтӗнҫе икӗ пуçлӑ ӑмӑрт-кайӑкла, патша калпаккиллӗ (трон), виçӗ тӗслӗ йалавла керп пулнӑ. Революцисе пулҫӗ те, патши те, тронӗ те, керпӗ те пӗтрӗç. Сотсиалисӑмла Канаш Республикинҫе çӗнӗ, сотсиалисӑмла республикӑна кӑтартакан керп тунӑ. Пирӗн керп-ӗç халӑхӑн керпӗ, ун çинҫе ӗçлемелли йапаласем курнаççӗ: çурлапа млатук, тата — Карл Марксӑн хӑватлӑ лосункӗ: — Пӗтӗм тӗнҫери пролеттарисем, пӗрлешӗр! тенипе Раççей Хветератсийӗн Сотсиалисӑмпа Канаш Республикки, тенӗ сӑмахсем çуталаççӗ.